24-меш çул тухаçъ. Хаас 10 пуç.

1941
АВГУСТ
20
ЮНКУН
19 (5810) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Комсомолăн пĕтĕм вăйне— Хĕрлĕ Çара пулăшма

Ленинла-сталинла комсомол социализмлă тăван çĕршывăн чысĕшĕн тата ирĕклĕхĕшĕн пынă историллĕ кĕрешӳсенче ӳссе çитĕннĕ, çак кĕрешӳсенче хăйне çирĕплетнĕ тата пиçĕхтернĕ. Тăван çĕршывăн чысĕшĕн тата ирĕклĕхшĕн паттăрла кĕрешнĕшĕн ленинла-сталинла комсомола совет халăхĕшĕн большевиксен партийĕ юратаççĕ тата хисеплеççĕ. «Комсомол,—тесе каланă Сталин юлташ,—яланах пирĕн боецсен малти речĕсенче тăнă».

Граждан вăрçин çулĕсенче тăшмансене хирĕç паттăрла çапăçнăшăн комсомола Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Социализм стройительствинче паттăрла кĕрешнĕшĕн ленинла-сталинла комсомола Ленин орденĕпе наградăланă. Комсомол яланах большевикла партин сывăх помощникĕ пулнă, парти, Сталин юлташ ертсе пынипе, вăл социализм строительствинче тĕлĕнмелле ӳссем тунă, тăвать те.

Отечественнăй аслă вăрçăн кунĕсенче комсомол организацисен тата комсомолецсен ĕçĕ пĕр тĕллеве—пирĕн тăван çĕршывăн хулисемпе ялĕсем çине тапăнса кĕрсе кайнă юнлă фашизма тĕппипех çĕмĕрсе пĕтерессине пăхăнмалла. Комсомолăн мĕнпур ĕçне фронта пулăшас, тыла çирĕплетес, комсомолецсене тата союзра тăман çамрăксене çар ĕçне вĕрентес, фронт валли паттăр боецсем, медсестрасем, санитаркăсем, сандружинницăсем массăллăн хатĕрлес интереса пăхăнтармалла. Халĕ комсомол организацисен мирлĕ вăхăтри шухăш-кăмăлсене, ĕç меслечĕсене, йăвашчунлăха пĕтерес пулать, кашни комсомолеца тăван çĕршывăн чысĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн, фашистла Германие çĕмĕрсе тăкма мобилизацилемелле, комсомолецсен фашизма хирĕç паттăрăн çапăçакансен малти ретне тăмалла.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче комсомол организацисемпе комсомолецсем пархатарлă ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем фабрикăсемпе заводсенче, машинно-тракторнăй станцисенче, колхозсенче ударлă, ырми-канми ĕçлесе фронта пулăшаççĕ, тыла çирĕплетеççĕ. Канашри вагонсем ĕсакан заводри комсомолецсем сталинла вахтăна тăрса виçшер норма тултараççĕ. Комсомолецсем станок патĕнчен уйрăлмасăр васкавлă заказсене хăвăрт туса оборона хăватне тĕрĕлетеççĕ. Комсомолецсем пуçарнипе завод коллективĕ оборона валли тимĕр-тăмăр пухать. Комсомолецсем кашни канмалли кунах воскресниксем туса ĕçлеççĕ, ĕçлесе илнĕ укçана оборона фондне параççĕ.

Çĕмĕрлери древкомбинатри комсомолецсем чăннипех те вăрçă вăхăчĕ хушнă пек ĕçлеççĕ. Сборочнăй цехри комсомолец Мостайкин юлташ икшер-виçшер норма тултарса ĕçлет. Мостайкин юлташ производствăра стахановла ĕçленĕ хушăрах, шофер ĕçне тăрăшса вĕрĕнет. Васильев комсомолец та отечественнăй вăрçă кунĕсенче мĕнле ĕçлемеллин примерне кăтартать. Вăл нормăна 200—300 процент тултарать, станоксене таса тытать, çар ĕçне куллен тăрăшса вĕренет. Комбинатра çакăн пек примерлă ĕçлекен комсомолецсем нумай. Халĕ плана тултарман комсомолецсем пачах та çук.

Шупашкар хулинчи комсомолецсем фронта тата Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем кашни вырсарникунах чугунçул çине, предприятисене кайса ĕçлеççĕ, уçăсене çĕршыв оборони фондне параççĕ. Хулари комсомолецсем çĕршыв оборони валли çĕршер тонна тимĕр-тăмăр пухса панă.

Комсомол организацисем предприятисене, колхозсене, чугунçулсене, тĕрлĕ складсене сыхлас ĕçе хăйсем çине илеççĕ. Вăрнар районĕнчи чугунçул линии сывăхĕнчи ялсенчи комсомол организацисем чугунçула сыхлама ятарласа постсем тунă. Чугунçул линин кашни километрне комсомолецсем кăнтăрла та, каçхине те сыхлаççĕ. Уламăртти паровозсем ĕсакан заводри комсомолецсем те завода сыхлассине хăйсем çине илнĕ. Кашни каç темиçе комсомолец завода хурал тăраççĕ, ирхине ĕçе тухаççĕ те икшер норма тултараççĕ.

Нумай комсомол организацисем комсомолецсене, çамрăксене çар ĕçне вĕрентессине лайăхлатрĕç. Çапла, Янгăлчри (Канаш р.) комсомолецсем-спартаковецсем пуçарнипе, 18 допризывник ГТО значокĕн çуллахи нормисене панă, 28 çамрăк ворошиловла стрелоксем пулма вĕренеççĕ, 14 хĕрача ГСО значокĕн нормисене панă. Комсомол организацисен çакăн пек пуçаруллă ĕçне халĕ кашни хулара, кашни ялта курма пулать. Отечественнăй аслă вăрçăра ленинла-сталинла комсомолăн яланах малти ретре пулмаллине кашни комсомолец ăнланса илет.

Хĕрлĕ Çара, фронта пулăшас тĕлĕшпе ку тарinчен тунă ĕçсемпе лăпланса ларма юрамасть. Комсомол организацисен, кашни комсомолецăн Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе тата ытларах, тата вăйлăрах ĕçлемелле. Халĕ комсомол организацисен ĕççыннисене сывлăшран килсе тапăнассинчен сыхланма вĕрентес тĕлĕшпе нихçанхинчен те ытларах ĕçлемелле. Çак ĕçре Осоавиахим организацисене куллен пулăшмалла, кашни комсомолецăн ПВХО нормине тамалла, правительство каларăн постановление пурнăçа кĕртес ĕçре примерлă пулмалла. Çĕрпӳ районĕнчи «Камай» колхозри комсомолецсем К. Андреев, А. Егорова, Прокопьев юлташсем уйра ĕçлекен колхозниксене ПВХО ĕçне вĕрентессине организацинленĕ, çак лайăх примера сарсах пынă.

Комсомолецсемпе комсомолкăсене запаспа тăракан командирсем, Осоавиахим уйăрнă командирсем пулăшнипе çар ĕçне вĕрентессине комсомол организацисен вăйлатса пынă. Хĕрлĕ Çар валли пулеметчиксем, снайперсем, танкистсем, мотоциклистсем, связистсем, медсестрасемпе санитаркăсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе кашни комсомол организацин çине тăрса ĕçлемелле. Çакна тума комсомол организацисен вăй та, çынсем те çителĕклĕ. Кунта пуçарулăх, ĕçе юратса тума тăрăшни кăна кирлĕ.

Кашни предприятие, колхоза, кашни сурта оборона крепоçĕ тумалла. Хамăр предприятисене, чугунçул линисене, колхозсен тырпулне, складсене, обществаллă суртсене сыхлас ĕçе лайăх организацилемелле. Социализмлă пурлăха сыхлама комсомолецсенчен ятарласа дружинăсем, постсем тумалла. Кашни комсомолеца, çамрăка тата кашни ĕççыннине социализмлă пурлăха куç шăрçине сыхланă пек сыхлама вĕрентмелле.

Вăрçă вăхăчĕн хăйĕн законĕ пур. Кашни заводра, колхозра, машинно-тракторнăй станцинче, учрежденире çарти пек, фронтри пек çирĕп дисциплина пулмалла. Комсомолецăн хăйĕн питех те дисциплинăллă пулмалла, дисциплинăна пăсакансене хирĕç хытă кĕрешмелле. Çакă вăл хушнă ĕçе вăхăтра тата лайăх тумаллине, революциллĕ сыхă тăмаллине, сӳпĕлтетме юраманнине, вăрçă вăрттăнлăхне çирĕп сыхламаллине, шиклĕх саракансене, сӳпĕлтисене хирĕç кĕрешмеллине пĕлтерет.

Халĕ комсомолецсем хушшинче çĕнĕ движени — двухсотниксен движенийĕ сарăлса кайрĕ. Двухсотниксем производствăра хăюллăх, пуçарулăх кăтартаççĕ, нормăсене икшер çĕр, виçшер çĕр процент тултараççĕ, техникăран вăй мĕн пама пултарнине йăлтах илеççĕ. Комсомолецсен çак движенине предприятисенче те, колхозсен уйхирĕсенче те анлăн сарса ямалла. Комсомолецăн станок çинче, колхозсен тинĕс пек сарăлса выртакан уйхирĕсенче паттăрла ĕçлемелле, Хĕрлĕ Çара пулăшас, тыла çирĕплетес ĕçре примерлă пулмалла.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çăран начальство составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин** орденĕ тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, çаксене **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Лейтенант **Дубенец** Андрей Петрович.
2. Старший политрук **Осипов** Кирилл Никифорович.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти августăн 15-мĕш.

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе пыма хăтланни ăнăççăр пулнă

Августăн 18-мĕшпе 19-мĕш хушшинче çĕрле нимĕçсен темиçе самолечĕ Мускав çине вĕçсе пыма хăтланнă. Тăшман самолечĕсене салатса янă, хула патне пыма паман. Пĕр самолет çеç хула патне татса кĕрсе вут чĕртекен тата фугаслă темиçе бомба пăрахнă. Бомбăсем ӳкнипе пулнă снеи пысăк мар.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Августăн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç питĕ вăйлă çапăçусем туса пынă. Вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн, пирĕн войскăсем Кингисепп хулинчен тухса кайнă.

Тăплĕн палăртнă даннăйсем тăрăх, августăн 16-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсенне, малтан кăтартса панă пек—19 самолет мар, 25 самолет персе антарнă. Августăн 17-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 22 самолетне персе антарнă. Пирĕн 18 самолет пĕтнĕ.

Балти тинĕсĕнче пирĕн торпеднăй катерсемпе авиаци нимĕçсен подводнăй лодкине тата противникăн икĕ транспортне путарнă.

* * *

Загороднов юлташ командир пулса ертсе пыракан красноармеецсен чăсне противник пирĕн совет войскисен тĕп группинчен татса илнĕ. Çак чăсри боецсем нимĕç фашисчĕсен войскисен тылĕнче 20 кун хушши çине тăрса тата татăклăн кĕрешнĕ. Пурте тăшмана çĕнтерес туйăмпа пĕтĕрсе тăрса, красноармеецсемпе командирсем Хĕрлĕ Çар йышăннă территори çине тухма, паттăрăн кĕрешсе, хăйсем валли çул уçса пынă. Материальнăй чăсе куç шăрçине сыхланă пек сыхласа, красноармеецсем тăшмана пысăкрах та пысăкрах сиен тума тăрăшнă, хăйсемпе тĕл пулакан нимĕç салтакĕсен групписене пĕр хĕрхенӳсĕр вĕлерсе пĕтернĕ, обозсене, батарейăсене, автоколоннăсене тата штабсене пĕтере-пĕтере тăхнă. Тăшманăн тылĕнче 20 кун хушши питĕ йывăр рейдра пырса, Загороднов юлташăн чăсĕ фашистсен 240 салтакне, продовольствипе боеприпассем турттаракан 25 обозпа колоннăсене, 14 станкозăй пулеметне, пĕр зенитнăй батарейине, çĕр айне чавса лартнă 12 танка тата пĕр полкăн штабне пĕтерсе тăкнă.

Часть командирĕ Загороднов юлташпа политрук Москвин юлташ тăшман çавăрса илнĕ çĕртен 520 боеца илсе тухнă, чăçăн пĕр орудипе пулемет та, пĕр винтовка та çухалман. Çавăн пекех вĕсем аманнă 25 красноармееца илсе тухнă.

* * *

Башмаков майор командир пулса ертсе пыракан красноармеецсен чăсĕ, артиллерин икĕ дивизионĕ пулăпса пынипе, 3. ялĕ патĕнче противника атакăланă. Нимĕçсем пирĕн боецсене хирĕç контратакăна танксемпе бронемашинăсем янă. Нимĕçсен машинисем çине бомбăсем пăрахма Ломакин капитанăн бомбардировщиксен эскадрильи вĕссе кайнă. Тăшман машинисемпе совет авиацийĕ хушшинчи çапăçу сехет çурă пынă, ку çапăçура нимĕçсене çĕнтернĕ. Нимĕçсен 16 машинине пĕтерсе тăкнă хыççăн, совет авиацийĕпе артиллерийĕ противникăн резервисем çине вăйлăн пеме тытăннă. Нимĕçсен темиçе роти автомашинăсем çине ларса Д. пункчĕ патнелле хайма хăтланнă, анчах нимĕçсен каялла чакакан подразделенийĕсен çулне старший лейтенант Первухинăн танковăй ротинчи боецсем пӳлсе лартнă. Противникăн речĕсенче паника пуçланнă. Башмаков майор ертсе пыракан красноармеецсен чăсĕ çак çапăçура нимĕçсен икĕ пехотнăй батальонне питĕ вăйлăн çапнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пурĕ 500 çына яхăн вĕлернĕ тата амантнă, 120 салтака тытăкана илнĕ. Трофейăсем хушшинче 7 танк тата тĕрлĕрен калибрлă 11 оруди пур.

* * *

Оккупацленĕ районсенче пурăнакансене фашистсем çавтери тискерле асаплантараççĕ. Степановка ялĕнче, совет работникĕсене тытса паманăшăн, нимĕçсем нумай хресченсене персе пăрахнă. Рудня ялĕнче фашистсем вырăнти халăх нимĕçсене «кĕтсе илнине» организацилеме шутланă. Ялта пурăнакансене пурне те микрофон патне хăваласа пухнă. Вĕсене юрлама хушнă. Хĕненине пăхмасăрах, çынсем нимĕн чĕнмесĕр тăнă. Кун хыççăн пĕр хӳтлĕхсĕр тăракан халăх çине фашистсем пăшалсенчен пеме тытăннă.

Олешино станцинче нимĕç самолечĕсем аялтан вĕçсе пырса, хĕрарăмсем, ачасем тата аманнă красноармеецсем ларса пыракан уçă платформăсене икĕ шелонĕ çине бомбăсем пăрахнă. Платформăсем çинче камсем ларса пынине летчиксем лайăхах курнă. Ачасемпе хĕрарăмсем ыраш ăшне кĕрсе пытанма хăтланнă, анчах вĕсене фашистсем пулеметсенчен пенĕ. Нумай ачасене, хĕрарăмсене, ватă çынсене тата аманнă красноармеецсене вĕлернĕ.

* * *

Советăн икĕ танкисчĕ—Ященкопа Устинов юлташсем, фашистсем çавăрса илнĕ çĕртен татса тухнă та, çĕрле Хĕрлĕ Çар чăсĕсем вырнаçнă çĕрелле утнă. Кĕтмен çĕртенех вĕсем нимĕçле каласăкине илтнĕ. Красноармеецсем çывăхарах шуса пынă та, вăрман çулĕн айккинче фашистсен танкĕ тăнине курнă. Танк çумĕнче, курăк çинче ларса, нимĕçсен виçĕ танкисчĕ эрех ĕçсе ларнă. Нимĕçсем ӳсĕрĕлсе çитсен, красноармеецсем танкистсем çине тапăннă. Нимĕçсен танкне тытса илсе, красноармеецсем ун çине ларнă та вăрманти çул тăрăх хĕвелтухăç еннелле кайнă. 5 километра яхăн кайнă хыççăн вĕсене нимĕç часовойĕсем чĕнсе илнĕ. Ященко сержант танк ăшĕнчен пуçне кăларнă та, нимĕçле усал сăмахсем каласа вăрçса пĕтернĕ, кун пек сăмахсене вăл нимĕç салтакĕсенчен нумай илтнĕ пулнă. Часовой, хăйĕн умĕнче Германи танкĕ тăрать тесе шутласа, ăна чарса тăман. Танк малалла кайнă. Танка тытса илнĕ вырăнтан 20—25 километр кайсан, Ященкопа Устинов юлташсем нимĕçсен аэродромĕ патне пырса тухнă. Унта икĕ теçеткене яхăн бомбардировщиксемпе истребительсем пулнă. Хăвăрт каласса татăлнă хыççăн, танкистсем çулран аэродром еннелле сасартăк пăрăннă та, мĕнпур вăйпа кайнă. Хыттăн кăшкăрса янисем, пăшал сассисем илтĕннĕ, анчах хăюллă красноармеецсене никам та тытса чарма пултарайман. Аэродром çине çĕмĕрсе кĕрсе, танкистсем унта тăракан нимĕç самолечĕсене латчăтса тата çĕмĕрме тытăннă. Фашистсен темиçе самолетне пĕтерсе тăкнă хыççăн, танкистсем мĕнпур вăйпа вăрмана кĕрсе кайнă та, унта танка вут тивертсе янă. Нимĕçсем çухалса кайнипе тата çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, совет танкисчĕсем тăшманран ăнăçлăнах тарса хăтăлнă. Тата икĕ кун иртсен вĕсем хăйсен чăсне çитнĕ.

* * *

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ г-н Рузвельт тата Англин премьер-министрĕ г-н Черчилль Сталин юлташ патне янă послани Совет Союзĕнчи ĕççыннисене питĕ те хытă интереслентерчĕ. Халăхсене ирĕке кăларассишĕн гитлера Германие хирĕç вăрçакан Совет Союзне пулăшма хатĕр тăнăшăн рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англири халăхсене тата вăл çĕршывсен правительствисене чĕререн тав тăваççĕ. «ССР Союзĕнчи халăхсем Германи фашизмне хирĕç çине тăрса кĕрешнĕ самантра,—тет Москаври «Красный пролетарий» заводри цехсенчен пĕрин главнăй инженерĕ Л. Лившиц юлташ,—икĕ аслă держава—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи енчен туслă туйăмсене палăртса пани уйрăмăнах хаклă. Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ Рузвельт тата Великобританин премьер-министрĕ Черчилль янă послани, çак посланире калакан мероприятисем гитлеризма пĕтĕмпех тата татăклăнах пĕтерсе тăкма виçĕ аслă державăсем—СССР, США тата Великобритани хушшинчи туслăх аталанса пынин çĕнĕ тапхăрĕ пулса тăрать. Этемлĕхĕн ирсĕр тăшманне Гитлера тата унăн ылханлă йыткĕтĕвĕне пĕтерсе тăкасси пирки нимĕнле иккĕленӳ те çук, пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтеретех!» Наладчик Новиков юлташ çапла калать: «халĕ гитлеризма хирĕç пыракан хаяр кĕрешӳ условийĕсенче сырьена тата хĕçпăшăхсемпе ытларах та ытларах тĕрĕссĕн усă курни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ Мускавра виçĕ державăсен канашлăзне пухас тесе пуçарса яннине пирĕн халăх хĕрӳллĕн ырласа кĕтсе илчĕ, ку вăл гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен хăватлă вăйсем малалла пĕтĕснине, ирĕке юратакан халăхсен пĕрлĕхлĕ фрончĕ малалла сарăлса тĕреклесе пынине çирĕплетсе парать».

Ленинградри ученăйсем Рузвельтпа Черчиллĕн посланине хӳрӳллĕн ырлаçĕ. «Пире США-па Англия пама пулнă пулăшу вăл гитлерла ордена пĕтерсе тăкас вăхăта çывхартать,—тесе çыраççĕ А. А. Байков, А. Ф. Иоффе тата Н. Н. Семенов академиксем.

Пире пăракан пулăшăва эпир тав туса йышăнатпăр. Иккĕленмелли çух, тĕнчери ирĕклĕ халăхсем пурте пĕрле пулса вăя хурсан, фашизма çĕмĕрсе тăкĕç, вара этемлĕх фашистла тискерлĕхрен ӳмĕрлĕхех ирĕке тухĕ». «Куйбышевуголь» тресчĕн Горький ячĕпе тăракан шахтинчи горняксем виçĕ аслă держава—СССР, США тата Великобритани хушшинчи туслăх аталанса пынин çĕнĕ тапхăрне ăшшăн саламлаççĕ. Ватă горняк Н. В. Алымов юлташ çапла калать: «Çак хыпар пире, гитлеризма хирĕç пыракан фронтăн мĕнпур тусĕсене, ирĕклĕхпе никама пăхăнмалăха чи пысăк хака хуракан çынсене савăнтарнă пекех, хытă савăнтарать. Виçĕ аслă державăн вăйĕсене пĕр хăватлă чĕмăра пĕрлештерĕç, ку вара вăл Гитлерăн бандитла шайккине пĕтерсе тăхĕ». Пĕр çын пек пулса йышăннă резолюцире горняксем Совет правительствине фашистла çĕлен-калтасене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкиччен хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешме хатĕр тăни çинчен шантарса каласçĕ.

Укерчĕк çинче: М. И. Калинин Кремльре герой-летчиксемпе калаçать, вĕсене Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн орденсемпе наградăланă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Августăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

* * *

Старший лейтенант Свинцов подразделенийĕнчи танксене хирĕç кĕрешекен боецсем августăн малтанхи вунăкунĕнче нимĕçсен 22 танкне стройран кăларнă. Тăшман машинисене ефрейтор Кузин пуринчен те нумайрах пĕтернĕ. Вăл 4 вăтам тата 1 йывăр танка вут хыптарса ярса сунтарнă.

Танксене хирĕç кĕрешекенсен тĕп хĕçпăшалĕ—горючи тултарнă бутылкăсем тата гранатăсен çыххисем. Çак кунсенче красноармеецсен группине нимĕçсен танкĕсем атакăланă. Гранатăсен малтанхи çыххисене ывăтса малта пыракан танка пĕтерсе тăкнă. Ытти машинăсем ăна пулăшма ывтăннă. Персе çĕмĕрнĕ танк хыçне тăрса, красноармеецсем противник çывхарасса кĕтнĕ. Боецсем патне çывхарнă пирвайхи машинăна гранатăсемпе персе çĕмĕрнĕ те бензин тултарнă бутылкăсем ывăтса хыптарса янă. Ытти танксем сылтăм еннелле шăрăнса В. ялĕ патнелле кайнă. Кунта вĕсене ефрейтор Кузин кĕтсе илнĕ. Окопра ларса вăл танк çывхарасса лăпкăн кĕтнĕ. Машина 15 метра çити çывхарсан, ефрейтор гусеница айне гранатăсен çыххине шăрахнă. Танк чарăнса тăнă. Иккĕмĕш машина хуллентерех пыма пуçланă. Ун çине бензин тултарнă бутылкăсем ывтăнма пуçланă. 4 танк çухатсан, нимĕçсем атака тума чарăннă.

* * *

Капитан Коврижкон подразделенийĕнчи боецсем тăшман танкĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Коврижко капитанăн подразделенийĕ пĕр çапăçура фашистсен 16 такне стройран кăларнă. Капитан Коврижко хăй çав кунхине 4 танка вут тивертсе янă, кĕçĕн лейтенант Геущенко 2 танка вут хыптарса сунтарнă.

* * *

Çурçĕр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче белофинсен 1000 çын ытла салтаксенчен тăракан батальонĕ пирĕн территори çине кĕрсе кайнă. Майор Немков командир пулса ертсе пыракан отряда тăшман батальонне çĕмĕрсе тăкма приказ панă. Красноармеецсем белофинсене кĕтмен çĕртен пырса çапнă. Çине тăрса вăйлăн çапăçнă хыççăн противника пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Немков юлташ отрячĕ батальон штабне хаклă оперативлă документсемпе пĕрле ярса илнĕ. Трофейăсен шутĕнче: пысăк калибрлă пулемет, 10 станковăй тата ручной пулеметсем, нумай винтовкăсем, 2 радиотелефоннăй станци, вуншар пин винтовка патронĕсем, çĕршер гранатăсемпе минăсем.

* * *

Нимĕç мотоциклисчĕсен группи çĕр каçма «Вторая пятилетка» совхозăн центральнăй участокĕнче чарăннă. Çĕрле Л. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ участока вăртăн çавăрса илнĕ. Часовойсене вĕлерсе, партизансем çуртсене вут тивертсе янă. Фашистсем вут хыпса илнĕ çуртсенчен чупса тухма тытăнсан, партизансем вĕсем çине пулеметсемпе винтовкăсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Нимĕç мотоциклисчĕсен группине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Партизансем юсавлă 30 мотоцикл ярса илнĕ.

Л. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕн боецĕсем августăн 11-мĕшĕнче Б. ялĕ çине тапăннă, вăл ялта нимĕç салтакĕсен-резервисчĕсен фронтта каякан роти вырнаçнă пулнă. Хăюллăн тата ăнсăртран тапăннине пула фашистсем ним тума аптраса хыпаланса ӳкнĕ. Пĕрремĕш хут персенех нумайĕш резервистсем хăйсен хĕрхенмелле пăрахнă. Партизансем ротăн вооруженийĕпе снаряженине пĕтĕмпе тенĕ пекех турта илнĕ. Тыткăна лекнисем калаçа панисенчен, ротăн личнăй составне çара июлĕн 18-мĕшĕнче илни курăннă. Нумайĕш салтаксем— мăнаçланнă çынсем, вĕсем халиччен те çар службинче пулман.

* * *

Нимĕçсем турта илнĕ Украина районĕсенче фашистла юнлă террор алхасать. Житомир облаçĕнчи пысăк мар район центрне Володарск-Волынска пырса кĕнĕ хыççăн, фашистсем обществаллă пурнăçа хуттăннă çынсене пурне те: обществаллă организацисен активисчĕсене, стахановецсене тата нимĕç офицерне кăмăла кайман çынсене пурне те тытса арестлеме пуçланă. Арестленисене сарайне питĕрсе илнĕ. Усĕр нимĕç офицерĕсемпе петлюровецсем кунта кашни кунах пырса, арестленисене тискеррĕн асаплантарнă: куçĕсене тĕке-тĕке шăтарнă, аллисене хуçнă е касса татнă, татăкăнтатăкăн касса ваклана, нумайĕшне чĕрĕллех çĕр айне пытарнă. Çак районра К. юлташ ертсе пынипе кĕрешекен партизансен отрячĕ хăйсен юлташĕсене çăлса кăларма шутланă. Пырса тапăнни нихăçанхинчен те ăнăçлă пулнă. Хула çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса; партизансем фашистла гарнизонăн пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Партизансемпе арестленисем пĕр-пĕринпе савăнăçлăн тĕл пулнă. Партизансен отрядне çав каçах 300 çын кĕнĕ.

* * *

Фашистсем хĕвелтухăç фронтĕнче тӳсекен калама çук пысăк çухатусене Германи командованийĕ васкавлă йĕркепе вĕрентсе хатĕрленĕ пополнението витме хăтланать. Германи çарĕн çак çĕнĕ чăсĕсен состояние «СС» дивизийĕн 5-мĕш артиллери полкĕн батарейи тăрăх кăларнă приказ усçăн кăтартса парать. Батарея командирĕ, оберштурмфюрер Подинель алă пусса кăларнă приказра резервистсене хатĕрленине çакăн пек характеристика панă:

«1. а) Строевой подготовка—ялах;

б) Вырăнта кĕрешесси тăрăх строевой подготовка тата стрелковой подготовка—пурин те çителĕксĕр;

в) Шалти служба, салтакла тирпейлĕх, тасалăхпа йĕркеллĕхĕн тăрăшасси, пуринчен ытларах çамрăк рекруттсен, питех те çителĕксĕр.

2. Расăлла уйрăмлăхсем тата сăнпуç пĕтĕмĕшпе илсен ялах.

3. Ас-пуç аталанăвĕ: хăшпĕрисем ăс-пуç енчен питех те çавăрăнусăр тата пачах пархатарсăр.

4. Пĕтĕмĕшпе хаклани: служба обязанноçĕсене пурнăçа кĕртме кăмăл тăвасси пĕтĕмĕшпе илсен пур чухне те мар лайăх.

Воспитани çителĕксĕр пулни тата пĕтĕмĕшлĕ подготовка ялăхи çар ĕçне вĕрентсе хатĕрлеме чăрмантарса тăраççĕ. Хальхи вăхăт ответлине нумайĕшĕ çителĕксĕр ăнланаççĕ».

* * *

Польша территорийĕнче тухса тăракан фашистла хаçатсем штурмовой отрядсен офицерĕсемпе е салтакĕсемпе пулакан «инкек-синкексем» çинчен сырнă хурлăхлă пĕлтерӳсем нумай пичетлеççĕ. Котовицы хулинче тухса тăракан нимĕç хаçачĕн 5 номерĕнче кăна Германи штурмовикĕсем вилни çинчен 11 пĕлтерӳ пичетленĕ. Нимĕç захватчикĕсене партизансен отрячĕсем вĕлернине вырăнти халăх пĕлсе тăрать. Польшăра фашизма хирĕçле движени кашни кунах ӳссе пырать. Нумаях та пулмасть Познань çывăхĕнчи цемент завочĕ пĕр кун кунĕпех ĕçлемесĕр тăнă, мĕншĕн тесен цехсенче приводной ременьсене пурне те касса татнă пулнă. Кельце станцинче нимĕçсен бронепоездне вăйлăн сменлесе стройран кăларнă. Партизансем балласт тиенĕ состава бронепоезд тăракан çул çине кĕртсе янă. Кельце—Скажиско чугунçул линийĕ çинче кĕпере взрыв туса аркатнă. Иваниска хулинче ӳсĕр офицерсем погром тунă. Офицерсем пурăнакан çурта партизансен отрячĕ çĕрле вут тĕртсе сунтарнă.

Кашни пучахшăн, кашни килограмм тырăшăн кĕрешмелле

☆ ★ ☆

Сталин ячĕпе тăракан колхозра

Чертаганри Сталин ячĕпе тăракан колхоз тырпул тухăçлăхне çулленех ӳстерсе пырать. 1940 çулта вăл, вăтам шутпа, гектартан 16,48 центнер тырă туса илнĕ.

Çакă ĕнтĕ колхозниксем вăя хурса ĕçленипе пулнă. Вĕсем уйхире сахал мар тислĕк, минерални удобренисем кăларнă. Вăхăтра акнă, вăхăтра çумланă, пĕр таккаламасăр пуçтарса кĕртнĕ. Пур чухне те агротехника правилисене тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшнă.

Колхоз кăçал иртнĕ çулхинчен те вăйлă тырпул туса илет. Ыраш иртнĕ çулхинчен чылай аванрах пулчĕ, çурхи культурăсем те япăх мар. Çаксем колхозниксене хавхалантараççĕ.

Халĕ колхозра хĕрӳллĕ ĕç пырать. Вăтамран илсен, тырă вырнă çĕрте кашни кун 100 çын ĕçлет. Вĕсем 6 звенона уйăрăлнă. Звеносене хĕрарăмсем ертсе пыраççĕ. Ĕç тул çутăлса çитичченех пуçланать те таврана тĕттĕм сăн çапсан кăна пĕтет. Кашни колхозник ĕçе иртерех тухса ытларах вырассишĕн тăрăшать, юлташĕсемпе ăмăртса ĕçлет.

— Манăн звенора нормăна тултарса ĕçлейменнисем çук, пуçламĕш шкулта вĕренекенсем те хăшпĕр кун пĕр норма ытла тăваççĕ,—тет звеньевой Дария Храмова.

Норма тăрăх кунне 200 кĕлте вырмалла. Уншăн 1,5 ĕçкунĕ тивет. Нормăна иртерсе тултарсан, прогрессивка йĕркипе хушса тӳлеççĕ. Çапла варз уйрăм колхозницăсем куллен 5—6 ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ. Сăмахран, 1-мĕш бригада членĕсем Варвара Архипова, Ольга Кузьмина, Агафия Грясугина, Татьяна Храмова кашни кун 300—400 кĕлте выраççĕ, II-мĕш бригадири паллă стахановкăсем: Агафия Храмова, Мария Липатова, Акулина Павлова, Д. Павлова, Акулина Мартынова, Варвара Захарова ялан 1,5—2-шер норма туса пыраççĕ.

Тырă вырнă çĕрте ватă колхозницăсемпе вĕренекенсем те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Агафия Садрыга 60 çулта, унăн икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта. Вăл колхоз производствинче активлă ĕçлекенсенчен пĕри. Халĕ ир пуçласа кăçчен тырă вырать, нормăна ытлашшипех тултарать. Августăн 13-мĕшĕнче вăл 200 кĕлте тата 20 çĕмел тунă. Урăхла каласан, нормăна вăл икĕ хут иртерсе тултарнă. 70 çулхи Анна Сретинская, 60 çулхи Ульяна Федорова, 66 çула кайнă Акулина Павлова колхозницăсем те кашни кунах 200—300 кĕлте тăваççĕ. 4-мĕш класра вĕренекенсем Ольга Григорьева, Елизавета Николаева, Василий Захаров нормăна тăтăшах тултарса пыраççĕ.

Ватă колхозник Герасим Махаров малтан, 7 кун хушшинче вырса пĕтерчĕç. Васкаса вырнă пулин те, хире пĕр пучах та пăрахса хăвармарĕç.

Августăн 15-мĕшĕнче колхоз кĕрхи акана тухрĕ. Кĕрхи тырăсене 6 кун хушшинче, пысăк пахалăхпа акса хăварассишĕн кĕрешетпĕр.

Ситес кунсенче çуртыррисене вырма тухатпăр. Çурхи тырăсене те кĕске срокра пĕр таккаланчăксăр пухса кĕртетпĕр.

Оборона фончĕ валли колхоз 1000 литр сĕт, 3 тонна тĕштырă тата ялхуçалăх выставкинче илнĕ премине—мотоциклет парать. Унсăр пуçне колхозниксемпе колхозницăсем вăрçă пĕтичен кашни уйăхрах 1—3-шер ĕçкунĕ параççĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене колхоз вăхăтра тултарса пырать. Паянхи куна сĕт-çу, аш-какай, тырă т. ыт. парса татнă.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырса, уйхир ĕçĕсене кĕске срокра вĕçлесе тăшмана хăвăртрах çапса арктар.

Е. ТИХОНОВ.

«Ёмĕт» колхоз председателĕ.

Çĕмĕрле.

Ыраш вырса пĕтертĕмĕр

ÇĔРПУ. Анатри-Кипекçери «Ёмĕт» колхозăн уйхирĕнче вăйлă тырпул çитĕнчĕ. Вăтам шутпа пĕр гектартан 20 центнер ыраш тухать. Çуртыррисем те аван ешĕреççĕ. Пĕр гектартан 14—15 центнертан кая мар тухасса шанма пулать.

Ватă колхозниксем çаласа панă тăрăх, пирĕн уйхирте кăçалхи пек вăйлă тырпул сайра çулсенче кăна çитĕннĕ.

Вăйлă çитĕннĕ ыраша вырма августăн 7-мĕшĕнче тухрăмăр. Малтанхи кунах ача яслипе столовăй йĕркеллĕ ĕçлеме тытăнчĕç.

Столовăйпа яслĕ колхозницăсене хирте тухăçлăн ĕçлеме май пачĕç. Колхозницăсем хире хĕвел тухиччен пырса хĕвел анса лариченех ĕçлерĕç. Уйрăмăнах А. Семенова, О. Демьянова, З. Иванова, А. Иванова, М. Корзакова, А. Петрова, А. Дмитриева, Е. Герасимова колхозницăсем кулленхи ĕç нормине 130—150-шар процент таран тултарса пычĕç.

Колхозницăсем стахановла ĕçлесе 91 гектар лаптăк çинчи ыраша августăн 15-мĕшĕнче, планпа пăхнинчен пĕр кун малтан, 7 кун хушшинче вырса пĕтерчĕç. Васкаса вырнă пулин те, хире пĕр пучах та пăрахса хăвармарĕç.

Августăн 15-мĕшĕнче колхоз кĕрхи акана тухрĕ. Кĕрхи тырăсене 6 кун хушшинче, пысăк пахалăхпа акса хăварассишĕн кĕрешетпĕр.

Ситес кунсенче çуртыррисене вырма тухатпăр. Çурхи тырăсене те кĕске срокра пĕр таккаланчăксăр пухса кĕртетпĕр.

Оборона фончĕ валли колхоз 1000 литр сĕт, 3 тонна тĕштырă тата ялхуçалăх выставкинче илнĕ премине—мотоциклет парать. Унсăр пуçне колхозниксемпе колхозницăсем вăрçă пĕтичен кашни уйăхрах 1—3-шер ĕçкунĕ параççĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене колхоз вăхăтра тултарса пырать. Паянхи куна сĕт-çу, аш-какай, тырă т. ыт. парса татнă.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырса, уйхир ĕçĕсене кĕске срокра вĕçлесе тăшмана хăвăртрах çапса арктар.

Е. ТИХОНОВ.

«Ёмĕт» колхоз председателĕ.

Уборка организованно иртет

Кăташири «Пионер» колхоз членĕсем нихăçанхинчен те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Комсомолец Степан Пугачев ертсе пыракан бригада уборкăра малта пырать. Ку бригадири И. Кириллов колхозник кулленхи ĕç нормине 180—200 процент таран тултарса ĕçлет. 50—60 çула çывхарнă Степан Матвеевпа Алексей Григорьев колхозниксем ывăлĕсене Хĕрлĕ Çара ăсатнă чух тăшманпа хаярăн та шаттăрăн çапăçма хушса янă. Хăйсем колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеме пуланă. Вĕсем ăна ĕçпе пурнăçлаççĕ. Вĕсем пĕр ĕçрен те юлмаççĕ, ĕçре хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Уборкăра ик. кĕшĕ те кулленхи ĕç нормине 140—150 процент тултарса пыраççĕ.

С. Пугачев бригадинчи М. Александрова, П. Пугачева, М. Петрова, А. Афанасьева колхозницăсем ĕç нормине яланах 150 процент таран тултарса пыраççĕ.

56 çулхи В. Константинов юлташ бригадинчи А. Яндышева, А. Сынкова, М. Никитина, Е. Андреева, Е. Сусанина, Е. Молькова, Т. Яковлева колхозницăсем кулленех 350—400-шер кĕлте вырса çыхаççĕ. Нормăна тултарман колхозниксем çук.

Колхозра агитацине массăллă ĕçе лайăх организациленĕ. Колхозри агитколлектив 15 çынтан тăрать. Агитаторсем колхозниксене кашни кунах Совет Информаци Бюровăн пĕлтерĕвĕсене вуласа ăнлантарса параççĕ. С. Пугачев, Б. Шоронов, С. Федоров, Макаров агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ. О. Николаева, А. Петрова, В. Васильев, Д. Федоров редакторсем бригадăсенче стена хаçачĕсем кăларнисĕр пуçне чтецсем пулса ĕçлеççĕ. Агитаторсем колхозниксене çар ĕçне вĕрентессине те организациленĕ. Б. Шоронов агитатор сывлăшран тапăннинчен сыхланас ыйтупа строительство бригадинчи колхозниксем хушшинче калаçусем туса ирттернĕ, кĕнекесем çинчи статьисене вуласа кăтартнă.

Колхозра ача ясли ĕçлет. Бригадăсенче уйрах столовăйсем организациленĕ.

Буденный ячĕпе тăракан, «Комбайн», «Сура» колхозсенче те уборка организованно иртет. Кашни колхозрах уйра 200—250 çын курма пулать. Вĕсем пуртене нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Районри колхозсем уборкăна организованно ирттернипе пĕрлех кĕртырриссене акма та тимлĕн тытăнаççĕ. «Пионер» колхозра акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине 6 шăн лав тислĕк кăларнă. Акма çĕре лайăх хатĕрленĕ. Колхозри комсомолец-тимĕрçĕ Г. Николаев 4 сеялка юсаса лартнă. Сеялкăсемпе ĕçлеме пултарулла çынсене уйăрнă.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Етĕрне р.

Хаваслăн ĕçлеççĕ

ИШЛЕИ. Мамăшри Каманин ячĕпе тăракан колхозăн кăçал 85 гектар ыраш пуçтарса кĕмелле. Колхозри уйрăм бригадăсем августăн 7-мĕшĕнче суйласа вырма тухрĕç. Пĕтĕм колхозĕпе 9-мĕшĕнче тухнă.

Колхоз членĕсем хушшинче ĕç дисциплини кулленех çирĕпленсе пырать. Тырпула чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртес ĕçе пур бригадăсенче те тĕрĕс организациленĕ. Иртнĕ çулта 53 колхозник тырпула пуçтарса кĕртес ĕçе хутшăнман пулсан, кăçал ватă стариксемпе карчăксем те, подростоксем те пурте хĕрӳ ĕçре. Вĕсем ăнса пулнă тырпула хăвăрт пухса кĕртес туйăмпа ĕçлеççĕ, ĕçре пахалăхсем кăтартма пуçларĕç.

Акă, тырă вырнă çĕрте А. Гаврилова, Е. Алексеева, Е. Филиппова, Е. Спиридонова колхозницăсем кашни кунах нормăна 150—180 процент тултарса пыраççĕ. Лайăхрах та лайăх ĕçлесе ытти сене пример кăтартаççĕ.

Акă тата колхозри чи паллă ударница. Çул хĕрринчи таптавсене машина вырайманать. Ăна çурлапа вырса пыраççĕ, çавсенчен пĕри Дария Спиридонова. Вăл 65 çулхи хĕрарăм. Ватăлнипе пичĕсем пĕркеленнĕ унăн.

— Эпĕ çамрăккисемпе танах ĕçлесе çитереймĕп те, çапах ĕçлеме тухатăп. Машина вырайман тĕлсене ерипен выркалăп,—тет вăл.

Ватă пулсан та хыпаланать. Вăл ывăнсан, кĕлте тĕми çине ларса канать. Никам та ăна васкатакан çук. Хушăран çеç арăмсемпе, хыпаланса ĕçлекен çамрăк хĕрсем çине пăхса, сăмахласа илет.

Çапла хăй майĕпе кана-кана ĕçленипех, 250 кĕлте таран вырма ĕлкĕрет.

Колхозра 2 жнейка. Вĕсене вырма тухиччен лайăх юсанă. Малтанхи кунсенче жнейкăпа ĕçлемен пулсан, халĕ кашни 8—9-шар гектар выраççĕ. Машиноведсем Толстовпа Гаврилов юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Колхозниксем машинăсемпе вырнă тырпула çийĕнчех кĕлтене сыхса, пучахсене пуçтарса пыраççĕ, кĕлтесене пĕр кунтах çĕмеле хываççĕ.

Уйхирте ĕçлекен колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. Агитаторсем хăйсен ĕçне уя куçарнă. Вĕсем кану вăхăтĕнче колхозниксене хаçат-журналсем вуласа, Хĕрлĕ Çăран фронтри паттăр ĕçĕсем çинчен каласа ăнлантараççĕ. Стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Колхоз счетоводчĕ Красильников малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, вăтам шутпа кашни гектартан 17—18 центнертан кая мар тĕштырă тухать, кашни ĕçкунĕ тăрăх 5 килограмран кая мар тĕштырă валеçсе памалла пулать. Колхозăн пахча-çимĕççĕсем те тухăçлă пулаççĕ.

А. КОЛЕНОВ.

Колхозсен уйхирĕнчи стахановла ĕç

ИЕПРЕÇ. Районри пур колхозсем те хальхи вăхăтри, отечественнăй аслă вăрçăн хăрушă кунĕсенчи ĕç условийĕсене шута илсе, ăнса пулнă вăйлă тырпула чи кĕске срокра тата пĕр таккаламасăр пухса кĕртме тăрăшаççĕ. Çавна май колхозсен уйхирĕсенче социализмлă ăмăртупа стахановла движени анлăн сарăлса пырать.

Колхозсен уйхирĕсенчи стахановла ĕçĕн паха опычĕсене вуншар примерсемпе илсе кăтартма пулать.

«Красная нива» колхозра кăçалхи уборка ĕçне ялти учительсем те хутшăннă. Черновăпа Коновалова учительницăсем ыраш вырнă çĕрте нормăна 150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

«Молния» колхозра та социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Кунта машинăсемпе туллин усă кураççĕ. Колхозăн 2 жнейка, 2 лобогрейка пур, вĕсем пурте ĕçре. Машиновед Михайлов нормăна 115—120 процент тултарса ĕçлет. Алăпа ыраш выракансем те ĕç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ. В. Иванова, Р. Тимофеева, Н. Мартьянова, Е. Кулякина уборкăн малтанхи кунĕсенче нормăна 110—120 процент тултарса ĕçленĕ пулсан, халĕ вĕсем 140—150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Районри колхозсем лайăх кунсен кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшаççĕ. Ирхине шурăмпуç çуттипе тухса мĕн тĕттĕм пуличченех уйра ĕçлеççĕ. Августăн 15-мĕшне Калинин ячĕпе тăракан колхоз ыраша 75 процент, «Чувашия» колхоз 66 процент, «Красный фронтовик» колхоз 55 процент вырса пуçтарчĕç.

Дм. МИХАЙЛОВ.

ЁÇРИ САВĂНĂÇ

☆ ★ ☆

Колхоз председателĕ Василий Дмитриевич паян мĕн иртеннех бригадăсенче ĕç мĕнле пынипе паллашса çӳренĕ. Малтанах вăл ыраш выракан колхозниксем патĕнче пулнă. Икĕ бригадăра ĕçсем мĕнле пынипе тĕплĕн паллашнă. Унтан ыраш акмалли участоксене сухаласа тата сӳрелесе хатĕрлекен колхозниксем патне кĕрсе тухнă.

Кăнтăрла иртсен колхоз канцелярине тавăрăнчĕ. Председательпе пĕрле унăн кабинетне тепĕр икĕ колхозник кĕрсе тăчĕç. Вĕсем бригадăсенчи столовăйсем валли продуктсем илме хут çыртарма килнĕ. Хăшпĕр бригадăсен çĕрĕсем ялтан тăватă-пиллĕк сухрăм аякра. Колхозниксем ĕçлес вăхăта киле килсе сӳресе саянăн яччăр тесе, тăватă бригадăра та столовăйсем организациленĕ. Апат-çимĕçе уйра колхозниксем ĕçленĕ çĕртех хатĕрлеççĕ. Председатель çак икĕ юлташа завхоз патне кайса çу, какай, çĕрулми, купăста илсе тухма хут çырса панă.

Колхоз клубĕнчен пĕр ушкăн ачасем тухрĕç. Нумай вĕсем. Яслĕ заведующийĕ Валентина Золотова вĕсене çерем çине выляма илсе кайрĕ. Ачасен ясли ыраш вырма тухнă кунах ĕçлеме тытăннă.

Тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ пур условисене те туса панă кунта. Колхозниксем ырма-канма пĕлмесĕр, пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Ыраш вырма вăйпитти колхозниксемпе пĕрлех, утмăл-ситмĕл çулхи карчăксем те, вунă-вуникĕ çулхи ачасем те тухаççĕ. 73 çула çитнĕ Перасковья Гордеева кашни кунах 1—1,5 норма тăвать. Çĕмелсене те вăл питĕ хитре тăвать, тет ăна мухтаса бригадир. Колхозница Анна Григорьева тата ытти чылай юлташсем нормăна 150 процент тултараççĕ. Подростоксем 35—40 ача кашни кунах ыраш вырма тухаççĕ.

— Ырашĕ питĕ вăйлă. Тĕмĕ вĕçне тĕмĕ ларать, ниепле те хăвăрт вырса ĕлкĕртме çук... Çапах та тепĕр виçĕтăватă кунтан пĕтĕмпех вырса пĕтеретпĕр,—тет председатель. Ĕç планĕ тăрăх 170 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 9 кун хушшинче пухса кĕртме палăртнă. Çавăн пек пулать те. Плана пынихăçан та пурнăçа кĕртмессĕр хăвармаççĕ кунта.

Каç пулса килес умĕн колхоз председателĕ Дмитриев юлташ каллех ун тухрĕ. Халĕ вăл ирхине çитсе ĕлкĕреймен бригадăсенче пулчĕ. Колхозницăсем хĕрсех ыраш выраççĕ. Хăшпĕрисем тата кĕлте çĕклесе çĕмел тăваççĕ. Çĕмел хыççăн çĕмел ларать.—Ак кунта тырă уйрăмах вăйлă пулчĕ. Çурхунне калий тăварĕ сапса алат панă. Суперфосфат сапни ун пекех пулмарĕ. Пирĕн çĕре пуринчен ытла калий тăварĕ усăлла,—тет иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Баранов. Çурхунне 25 гектар çине калий тăварĕ сапнă. Вăйлă тырпул туса илес тесе агротехникăллă ытти ĕçсене те тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынă. Тырпулсем вăйлăн ӳснĕ, колхозниксем ăна тирпейлĕ пухса кĕме тăрăшаççĕ.

Председательпе бригадир çĕмелсем хушшипе утса тухрĕç. Хăшпĕр тĕлте çĕмел тăрринчи кĕлтесене çил вĕçтерсе ӳкернĕ. Кĕлтесене илсе каллех çĕмел тăррине хураççĕ.

— Тăккаланчăк çук вĕт, çакăн пек вырсан юрать-и?—ыйтать бригадир. Председатель колхозниксене лайăх ĕçленĕшĕн мухтанисĕр пуçне нимĕн те каламарĕ.

Кĕрхи тулă 17 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Çуртрисем те часах пулса çитеççĕ. Умра ответлă ĕçсем тăраççĕ. Колхозниксем çаксене шута илсе халиччен пулман пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ. Тырпулсене организованно пухса кĕни вăл фашистла çынçиенсене вĕлермеллех çапса çĕмĕрни пулать. Çакна лайăх ăнланаççĕ колхозниксем.

* * *

Молотов ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене организованно пухса кĕнипе пĕрлех, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырать. 1941 çулти обязательство шучĕпе 1940 çулти тырăран 36 центнер тулă, 74 центнер сĕлĕ, пăрса йышши тырăсем 16 центнер панă.—Государствăна тырă тăратасси пирĕн пĕрремĕш заповедь, эпир ăна вăхăтра пурнăçлатпăр,—тет колхоз председателĕ Дмитриев.

Т. МАЙОРОВ.

Канаш р.

Кольцова звенинче

Анастасия Кольцова, иккĕмĕш бригадăри пĕрремĕш звено звеньевойĕ, Моисей Семеновпа пĕрле вăл вырнă тĕмсене шутласа пырать:

—...Вăтăр çиччĕ, вăтăр саккăр... хĕрĕх, хĕрĕх пĕрре... аллă...

Пĕтĕмпе миçе тĕм пулнине вăл карандашне чĕлхипе йĕпетсе илсе хут çине паллă туса хăварать. Унтан Семеновпа юнашар выракан колхозницăн — Вера Алексеевăн тĕмĕсене шутлама тытăнать.

Тĕмсен хисепне вăл çĕмелсем тума кĕлтесем йăтас умĕн шутласа тухать. Акă кĕçех тĕмсене шута илсе пĕтерчĕç. Кĕлтесем йăтма пуçларĕç.

Халех каç пулмасть-ха, çапах кĕлтесене халех йăтса хурсан авантарах. Унсăрăн, кĕлтесене хальтерех йăтмасан, çĕмелсене тума часах мар. Çĕмелсем çăра ларса пыраççĕ. Çĕмел тума пĕлекенсем звенора сахалтарах, вĕсен ку çĕмелсене кĕçĕрех туса пĕтерес пулать. Çавăнпа вĕсене малтантарах кĕлтесем йăтса пачĕç.

Анастасия Кольцова аллинче хăшпĕр колхозниксен паянхи ĕçсен малтанхи итогĕсем пур, анчах ку итогсем ытла тулли мар пулсан та, вĕсем хăйсен результачĕсене уçăмлăн кăтартса параççĕ.

Акă мĕнле результатсем вĕсем:

— Феодора Львова, Феврония Иванова, Федорова, Семенова колхозницăсем хăйсен нормисене ытлашшипех тултарнă.

Каçчен татах вĕсем темиçе вунпăр тĕм тăваççĕ. Кун пек çынсене тата бригадăра «ывăнма пĕлмен çынсем» теççĕ. Вĕсем чăнах ывăнма пĕлмеççĕ. Кăвак çутă килнĕ чухнех уя тухаççĕ те, каçчен, хĕвел анса тĕттĕм сăн çапиччен каçалăк хĕрринче пулаççĕ. Ал вăл ĕç патĕнче хĕрсе пырать.

Нормăна пĕр гектар çинчи ыраша 19 çын вырсан, вĕсене кашнине иккĕр ĕçкунĕ параççĕ. Вуннăн вĕсем унтан ытларах выраççĕ, 2,4—2,5-шер ĕçкунĕ илеççĕ.

Звеньевой аллинче çĕнĕ хаçатсем пур. Вăл хăй звенинчи колхозниксене Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисене тата боевой эпизодсене вуласа парать.

Колхозниксем фашизма ылханаççĕ. Вĕсем урса кайнă фашизма хăйсен стахановла ĕçĕсемпе отпор параççĕ, тырпула срокра тата таккаланчăксăр пухса кĕртме тăрăшаççĕ.

ИВ. МОСЕЕВ.

Вăрманкасси, Сталин ячĕпе тăракан колхозăн 2-мĕш бригадири 1-мĕш звено, Элĕк р.

Пурте хăйсен выраннĕнче

Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Корнил Кириллович Бархаткин бригадирсене правленине чĕнтерчĕ.

— Ыран камăн мĕн тумалли çинчен тата паянхи ĕçсен итогĕ çинчен калаçăпăр,—терĕ вăл.

Канашлу пумая тăсăлмарĕ. Шавласа ларасси те пулмарĕ. Кашни бригадăна ыран валли задани панă.

Колхозлă ялăн ирĕ яланах пĕр вăхăтра, ирхине ирех пуçланать. Ĕçлеме пултаракан колхозниксем пурте уйра, ăнса пулнă тырпула пуçтарса кĕртнĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, колхозăн кăçал гектартан 100 пат тĕштырă тухмалла. Уйра ĕçлекен колхозниксен кану вăхăтне лайăх организациленĕ. Уйрах апат-çимĕççемпĕ çерсе çиеççĕ, унтах выртса канаççĕ. Çамрăк ачасем колхоз площадкинче пурăнаççĕ. — Паян эпир ташларăмăр, вылярăмăр, пире Матрена аппа юратса пăхать,—тет 6 çулхи Оля, амăшĕ çавăтса пыраканскер.

— Колхозра ĕçлени те фронта пулăшниех пулать. Мĕнчухлĕ лайăх ĕçлетшĕр, тăшмана çапса аркатма Хĕрлĕ Çара çавăн чухлĕ ытларах пулăшатпăр. Çĕршыв пирĕн çĕнтерӳллĕ, унăн халăхĕ паттăр! — теççĕ колхозниксем.

Колхоз хĕле лайăх хатĕрленет. Выльăх-чĕрлĕх фермисен витисене юсаттарнă. Халĕ ĕне вити тăваççĕ.

И. ТИМОНИН.

Етĕрне р.

Ĕçĕн результачĕ куç умĕнче

СĔНТĔРВĂРРИ. Тутаркассинчи «Моряк» колхозăн уйхирĕнче тырпул вăйлă пулчĕ. Анса пулнă тырпула вăхăтра пуçтарса кĕнĕ çĕрте колхозниксем пурте хастарлăн ĕçлеççĕ. 139 гектар çинчи кĕрхи тырăна 6 кун хушшинче пуçтарса кĕме пăхнă. Чылай колхозниксем куллен икшер норма туса пыраççĕ. Сорокина, Иванова, Егорова колхозницăсем кунне 85 тĕм таран вырса çыхаççĕ. Ватă пирки иртнĕ çулсенче ĕçлеме тухман колхозницăсем те халь тырă выраççĕ. Акă 66 çулхи Анастасия Айзова колхозница сĕм сукăр пулин те, никам пырса чĕнмесĕрех, ĕçлеме тухать, вăл куллен 15 тĕм ыраш вырать. Çакăн пек ватă колхозниксем колхозра татах та пур. Алексей Николаев кунне 25 тĕм таран вырса çыхать. Вăл çамрăксене стахановла ĕçлеме хавхалантарать. Çамрăксене хăйпе пĕрле ăмăртса ĕçлеме чĕнет.

Колхозра пĕчĕк ачасем валли площадка уçса панă, унта куллен 53 ача çӳрет.

Г. ЗАКАМСКИЙ.

Халăх пĕртте канма пĕлмест

Ыраш пуссине çитсен, çынсем ăçта тырă вырнине пĕлес тесе, тарантас ларчăкĕ çине тăрса пăхрăмăр.

— Лере, улăх хĕрринче выраççĕ пулас, — терĕ юлташ уй урлă карăнарах пăхса. — Вăл енчен акă ял пуçне тухакан çулпа икĕ хĕрарăм хăпараççĕ, тырă вырнă çĕртен килеççĕ пулмалла.

Эпир вăл хĕрарăмсен умне тухрăмăр. Пĕри Екатерина Аникина пулчĕ, тепри — Матрена Кузьмина. Уя вĕсем кăнтăрлахи апат илсе тухнă. Иккĕш те колхоз столовăйĕнче ĕçлеççĕ.

— Ăçта сирĕн тырă выраççĕ?

— Пĕр бригади кунта, çак çул хĕрринчех, лапамра вырать. Халĕ апата ларчĕç. Ытти бригадăсем кунтан курăнмаççĕ, вĕсем лере, çав уй хыçĕнче.

Аникинăпа Кузьмина хăпарнă çулпа антăмăр. Афанасий Орлов, пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ, пирĕн çул умне тухрĕ.

— Эсир ăçта кайма тухнă? Ку çул кунтан, улăха аннисĕр пуçне, нихăçан та тухмасть. Каялла çавăрăнăр.

— Çавăрăнар мар пуль. Ятарласа сан пата килтĕмĕр.

— Кам пултăр эсир?

Орлов юлташа хамăрпа паллаштартăмăр. Вăл хĕпĕртенĕ тата темĕнле хыпăнса ӳкнĕ пек пулчĕ. Пирĕнпе алă тытрĕ.

— Эсир пулнă иккен корреспондент. Çураки вăхăтĕнче манăн бригада çинчен пĕр хаçатра витĕмлĕн асăнса илтĕр. Ку бригада текех вăл мар.

Ку бригада, чăнах, вăл мар. Унăн бригадирĕ тата бригадăн членĕсем çавсемех, анчах вĕсен дисциплини тата вĕсен хастарлăхĕ вăл мар, ун чухнехинчен темĕн чухлĕ çирĕпрех.

Бригадир хăйĕн блок-нотне пиçиххи хушшинчен кăларчĕ. Блок-нотăн хупăлашкине, унтан страницисене — пĕрне, иккĕшне уçрĕ. Ку страницăсенчи хушаматсемпе цифрăсем çине пăхса илсе, Орлов юлташ пире темĕн каласшăнччĕ, анчах çак вăхăтра ту енчи каçалăк хĕрринчен хĕрарăмăн уçă та çинçе сасси илтĕнчĕ.

— Орлов, эпир кăнтăр канни канмастпăр. Тырă вырма тăрăшатпăр, чармастăн пуль?

— Кам чарать, вырăр.

— Вырас пулать. Хальтерех вырса пĕтернине нимĕн те çитмест, тырри шултра пучахлă, вăл кăшт типсе çитсенех тăкăнма пуçлать. Çуртры те хыçран хăвалать. Хальхи лару-тăру татах та тимлĕрех ĕçлеме ыйтать, — хутшăнчĕç ытти колхозниксем.

Кăнтăрлахи апат хыççăнах каçалăк малалла кайма тытăнчĕ.

— Пăхăр ĕнтĕ, халăх пĕртте канма пĕлмест. Ирех тухаççĕ те сĕм тĕттĕмччен выраççĕ.

Бригадир тепĕр хут блок-нот çине пăхса илчĕ.

— Эпĕ çак çынсенчен тĕлĕнетĕп. Питĕ маттур çынсем. Ирина Васильевăна илес. Вăл куллен нормăна ирттерсе тултарать. Нормăна ирттерсе тултаракансене ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕ пуçне тепĕр çавăн чухлĕ ĕçкунĕ хушса параттăр. Ирина ĕнер 2,1 ĕçкунĕ тунă, ăна эпир тепĕр çавăн чухлĕ ĕçкунĕ хушса патăмăр.

Ирина Васильевăпа юнашар, ав, сылтăм енче, Ирина Лукина вырать. Иккĕш те хĕрсем вĕсем, иккĕш те пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, нихăш те пĕр-пĕринчен юласшăн мар. Çакăн пек çынсем бригадăна малалла тӳртса пыраççĕ, ĕçе тĕрĕс организациленĕ пулăшаççĕ. Çавăнпа калатăп, манăн бригадăра çуркуннерниннипе дисциплина та çирĕпленчĕ, бригада та хăй ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыма тытăнчĕ.

Каçалăк хĕрри пĕчĕккĕнех малалла кайса пырать. Хыçалта тĕм хыççăн тĕм ларса пырать.

Колхозниксен ĕçĕ тата вĕсен хастарлăхĕ питех те хĕпĕртеттерет. Бригада тырпула кĕске срокра тата пĕр таккаçăр пухса кĕртет.

Афанасий Орлов малтанхи кун хăйĕн бригадинче кăшт каннă вăхăт хушăра митинг туса ирттернĕ. Унта вăл çапла калана:

— Германи фашизмне хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленчĕ. Тылри халах фронта çирĕплетессишĕн кĕрешет. Оборона фондне укçа-тенкĕ хывать, тырпул парать. Эпир те хамăр ĕçкунĕсем çине тивекен тырăран пĕр пайне оборона фондне хывма пултаратпăр.

Колхозниксем бригадир сăмахĕне пурте, пĕр çын пек пулса, килĕшнĕ, пĕр кунхи ĕçкунĕ çине тивекен тупăша оборона фондне панă йышăнса хăварнă.

— Эпир, — тенĕ вĕсем каннă хыççăн тырă вырма тытăннă чухне, — тылра, фронтра пекех пĕтĕм вăя тăшмана çĕнтернĕ çĕре парăпăр. Акă ывăçра тырă, вăл питĕ сулăмлă, çак сулăм тăшмана пырса çапăнтăр. Хастарлăрах ĕçлĕпĕр, колхозник юлташсем.

Бригадир кашни колхозник ĕçĕн пахалăхне уйрăмăнах тĕрĕслет. Çитменлĕхсене тата паха енсене çавăнтах палăртса хăварать. Çакă вăл колхозниксен хастарлăхне хăпартать, тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать.

Ку бригада колхозра малтан кая юлса пынă бригада мар. Халĕ вăл колхозра ытти бригадăсемпе паха тĕслĕхсем кăтартса ыракан бригада шутланать.

ЭЛĔК. (Хамăр корр.).

Çĕршывăн продовольстви ресурсисене пĕтĕмпех мобилизацилемелле

Вăрçă условийĕсенче продовольстви вапасĕсем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Гитлерла «виççĕмĕш империн» пĕтесси ширĕн хĕçпăшал вăйхăватĕнчен çеç мар килет. Вăл пĕтесси совет çĕршывĕн продовольстви ресурсисем иксĕлми нумай пулнинчен те килет, гитлерла çарсен тылĕ—выçлăх тылĕ.

Пирĕн çĕршывра пур çĕрте те Хĕрлĕ Çара валли вооружени туса кăларассине ӳстерес тĕлĕшпе çеç мар, çавăн пекех государствăн вăрçă условийĕсенче питех те кирлĕ пулса тăракан продовольстви резервисене сарассишĕн те ĕçлеççĕ.

Халĕ колхозсемпе совхозсем çĕнĕ тырпула пухса кĕрес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Тырпул кăçал пур çĕрте те иртнĕ çултинчен вăйлă. Тырпулсем çеç мар, çавăн пекех техникăллă культурăсем те, пахча-çимĕç те, çĕрулми те тулăхлă ӳссе çитĕнчĕç. Садсем фрукт нумай параççĕ, вăрмансенче — çырласемпе кăмпасем нумай. Продовольстви парса тăракан çак çăлкуçсем государствăшăн пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Кусемсĕр пуçне тата продовольстви ресурсĕсене ӳстерме кашни районрах, кашни облаçрех ытти майсем те нумай. Çак майсемпе пĕлсе тата хăвăрт усă курни çеç кирлĕ. Сăмахран, вырăнти халăха апат-çимĕç продукчĕсем çителĕклĕ парса тăрассинче апат-çимĕçсен юлашкийĕсемпе усă курса сыснасем самăртма хушни, вырăнти водоемсенче пулă тытни пысăк пулăшу парать.

Продовольстви парса тăрассин çăлкуçне сарас тĕлĕшпе пулнă пит паха пуçару çинчен нумай пулмасть Совет Информбюровĕ пĕлтерчĕ.

Алтай крайĕнчи Троицк ялĕнче районри пищекомбинат работникĕсем улма-çырла таврашĕсенчен тĕрлĕ япала тумалли цех уçнă.

Калинин облаçĕнчи 22 пищекомбинат вырăнти водоемсенчен пулă тытас ĕçе ăнăçлăн организацинелĕ.

Машинăсем тăвакан «Знамя Октября» заводри работниксем подсобнăй хуçалăха лайăх организациленĕ. Заводри подсобнăй хуçалăхăн сысна ферминче 300 сысна самăртма хушнă. Кăмпа ӳстермелли 25 грибница тунă. Хуçалăхăн кролик ферминче 4 шине яхăн кролик тăр. Заводри столовăйсем хăйсен хуçалăхĕнчи пахчасенчен кашни кунах симĕс пахча-çимĕç илсе тăраççĕ.

«Красное знамя» фабрикăра кайăк-кĕшĕк ĕрчетекен пысăк ферма уçнă. Фермăра кайăк-кĕшĕксене фабрикăри рабочисемпе служащисен семьисенче çынсем пăхаççĕ.

Вырăнти суту-илӳ организацийĕсен тата столовăйсемпе ресторансен магазинсенче, столовăйсенче, общежитисенче тата складсенче пулакан отходсемпе усă курса, 1941 çул вĕçленнĕ тĕле çур миллион ытла сысна чĕртсе самăртмалла. Санаторисем, больницăсем, инвалидсен çурчĕсем, ача çурчĕсем, садсемпе яслĕсем хăйсен учрежденийĕсем çумĕнче сыснасем самăртма хушнăми пунктсем тума пултараççĕ тата тумалла та.

Аçта юханшывсем, кӳлĕсем, пĕвесем пур, çавăнта пур çĕрте те пулă тытас ĕçе организацилемелле. Пулă тытма юратакансене пур çĕрте те тупма пулать,—çак çынсем пулă тытас ĕçе чăннипех организацилеме пултараççĕ. Ун чухне вара базарсенче те пулă çителĕклех пулать.

Кăçал пухса илнĕ фруктсене иртнĕ çултинчен виçĕ хут нумайрах типĕтсе хатĕрлемелле. Виноградсемпе абрикоссемсĕр пуçне грушăсем, сливăсем ытларах типĕтес пулать.

Колхозсен тата колхозниксен кăçал государствăна типĕтнĕ пахча-çимĕççем пе çĕрулмине нумай памалла. Заготовка енĕпе панă задани вăл—ответлă ĕç, çавăнпа ăна шăпах кăтартса панă срокра пурнăçлас пулать. Пахча-çимĕççемпе çĕрулмине массăллăн типĕтесси пысăк ĕç пулса тăрать. Типĕтнĕ çĕрулми чĕрĕ çĕрулмирен вунă хута яхăн çăмăл, çапла вара ăна турттарса кайнă чухне вунă вагон та таварт турттармалли пĕр состава улăштарма пултарать. Çĕрулмипе ытти пахча-çимĕçсене типĕтни фронта валли кирлĕ япаласене турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен транспортăн ĕçне чылай çăмăллатать, çара тата халăха валли çĕрулми çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те илсе пырса тăма май парать.

Пахча-çимĕççемпе çĕрулмине, çавăн пекех фруктсене те, ятарласа тунă камерăсенче типĕтесси обязательно пулса тăмасть. Ку ĕçре кирек мĕнле кăмакапа та, кăмака çийĕпе те, плитасем çинчи духовкăсемпе те усă курма пулать.

Пирĕн колхозницăсем хуçалăхра пуринпĕр те тăрăшаççĕ. Вĕсем çак ĕçре те хăйсем ĕçе юратнине, пĕлнине кăтартса пама тăрăшĕç. Колхозницăсем фруктсем, пахча-çимĕççемпе çĕрулми, кăмпа типĕтекен, хăяр, помидор, купăста тăварлакан артельсен пункчĕсене тăвас ĕçре пуçарса пыракансем пулмалла та. Вĕсем хăйсен колхозĕсенчи руководительсене вырăнта хăйсем патĕнчех савăт-сапасем тăвас ĕçе йĕркеleме май пурри çинчен аса илтерме тивĕç. Çапла вара, ĕçлесе хатĕрленĕ продукцин сахалтан та пĕрре виççĕмĕш пайне государствăна сутас тата кооператив организацийĕсене леççе парас ĕçре нимĕнле чăрмавсем те пулмалла мар.

Ачасемпе подростоксем валли халĕ пысăк та интереслĕ ĕç пур. Уйра, вăрмансенче пит нумай пулакан садпахчи çимĕçĕсемпе çырласене, кăмпасене тата эмель тумалли ӳсен-тăрансене пухма чи малтанах вĕсен хушăш пулать. Вăрмансенче пурлăх нумай пухма пулать. Вĕсем—йӳçĕ улма, ӳт груши, клюква, брусника, хура çырла, шăлан çырли, маййăр, йĕкель, каштан, пур сортлă кăмпасем те. Ачасем вăрмана юратсах каяççĕ. Вĕсене организацилени çеç кирлĕ тата ачасемпе ытти çимĕççене пурне те хăвăрт ĕçлесе хатĕрлемелле (пуринчен ытла типĕтмелле).

Халĕ пĕр куна та ахаль ирттермелле мар. Çу вĕçленсе килет, хĕвелпе ăшă пулăпса пынипе тумалли ĕçсем нумай.

Продовольстви тăратмалли пур ресурссене те мобилизацилесси вăл — государствăллă пысăк ĕç. Ăна тĕп-тĕрĕç, организациллĕн, çарти пек пурнăçлас пулать.

Колхозсенчи продукцине тиенĕ обозсем государствăн заготовка пункчĕсенне татти-сыпписĕр каяççĕ. Çакăн пек кашни обозăн малта пыракан лавĕ çинче: «Пĕтĕм вăя фронта пулăпас çĕре парар» текен плакат ялкăшса пырать. Çак лозунг колхозсем вăрçă лару-тăрăвĕнче мĕнле ĕçлемеллине тата вĕсен пĕтĕм ĕçĕ мĕнле пулмаллине тĕрĕс кăтартса парать.

Хăйсен пĕтĕм производствине вăрçă ыйтăвĕсене тивĕçлĕн урăхлатса çĕнетсе, хăйсен хуçалăхĕнчи пĕтĕм ресурссемпе усă курса, колхозсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен парăмне пурнăçлĕç—вĕсем çара тата çĕршыва валли пур йышши продовольствипе ялхуçалăх чĕртаварне те çителĕклĕ таран парса тăрĕç.

А. ЛЮБИМОВ.

СССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Совет Союзĕн Геройĕ капитан А. А. Краснов командир пулса ертсе пыракан Н-ски часть С. хулинчен фашистсен дивизине хĕссе кăларнă, çак çапăçура вăл 60 танк ытла, пит нумай автомашинăсем, мотоциклсем, орудисем пĕтерсе тăкнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Совет Союзĕн Геройĕ капитан Краснов юлташ (сылтăмра) тата старший политрук орденоносец Оньков юлташ.

М. Трахман фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

ПАТРИОТКА ÇЫРĂВĔ

Елена Герасимова уйăх çурă каялла хăйĕн юлташĕсенчен уйăрăлса фронта тухса кайнă. Ана юлташĕсем ăшшăн ăсатнă.

Герасимова хăйĕн çамрăк чĕрипе, хăвăртах фронта çитме ĕмĕтленнĕ. Красноармеецсем... хăшĕсем суранланнă, вĕсене пулăшу памалла. Вăл хăйĕн ĕçне часах тытăнасса шаннă. Хăйне çуратса ӳстернĕ тăван çĕршыв, аслă Сталин унăн асĕнчен тухман.

Шурă конверт... Советски больницинче ĕçлекен юлташĕсем хăйсен тусĕнчен—Герасимовăран çыру илнĕ.

«Хаклă тусăмсем!

Сире фронтри медсестраран пысăк салам. Мухтавлă çĕршывăн воинĕсем тăван çĕрĕн кашни пусăмĕшĕн çирĕп кăкăрпа тăрса çапăçнă вăхăтра эпĕ те хăюллă пулни çинчен пĕлтеретĕп сире. Эпĕ хамăн пĕтĕм вăя, пĕтĕм пĕлĕве аманнă боецсене, командирсене, политработниксене хăвăртрах сыватас çĕре хуратăп. Кунта эпĕ кашни медицина работникĕ геройла красноармеецсемшĕн тăрăшнине куратăп, нумай работниксем хăйсен юнĕсене аманнă красноармеецсене парса, вĕсене вилĕмрен çăлаççĕ.

Эсир, манăн юлташсем, тылра пурăнатăр. Анчах, пирĕн тыл çирĕп пулмаллине яланах асра тытас пулать. Тыл çирĕп пулни фронтăн тĕрекĕ пулса тăрать. Çавăнпа та сирĕн кашни ĕçех вăрçă вăхăтĕнчи обстановка ыйтнă пек туса пымалла. Сирĕн задача—халăха пирвайхи пулăшу пама вĕрентесси. Эсир çакна чыслăн пурнăçласа пырасса шанатăп эпĕ.

Тăшманăн ирсĕр планĕсене аркатса яратпăр, ăна ним ĕлмичченех çапса çĕмĕретпĕр. Эпĕ хамăн чыса—хамăран аманнă красноармеецсене сыватас чыса пĕр минутлăха та манмастăп. Тăван çĕршывăшăн кирек хăш вăхăтра та пуçа хума хатĕр.

Салампа—Герасимова.

Больницăра ĕçлекенсем ку çырăва вуласан пурте хумханса кайрĕç. Вĕсен те тăван çĕршывшăн, халăхшăн ĕçлес, хăвăртрах çĕнтерӳ тăвас шухăш вăйлăн вĕрет. Вĕсем çамрăк патриотка сĕнĕвĕсене яланах асра тытса, ĕçре пурнăçларĕç.

Я. СИГАЙ.

Советски р.

Малта пыракан сельпо

Кĕнекесене халăх хушшине сарас тĕлĕшпе Мăн-Сĕнтĕрти сельпо районри малта пыракан сельпо шутланса тăрать. Сельпо работникĕсем çĕнĕ кĕнекесене Шупашкартан çийĕнчех илсе пырса магазинсенче сутаççĕ тата сельпо отделенийĕсене валеççе параççĕ.

Нумаях пулмасть Мăн-Сĕнтĕрти сельпо Шупашкартан 7 пин тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем илсе килчĕ. Вĕсенчен чылайăшĕсем оборонăллă литература: «Будь готов к ПВХО», «ГСО», «Тăван çĕршывшăн», «Фронтри калавсем», çитес вĕренӳ çулĕнче шкулсенче вĕренмелли кĕнекесем.

Ф. АФАНАСЬЕВ.

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Çынсем пурăнакан пунктсенче светомаскировка тăвасси

Светомаскировка задачи — сывлăшран пыракан противнике ориентиресем парас марри, бомбăсене тĕллесе пăрахма май парас марри. **Затемнение (тĕттĕмлетессине) пĕтĕмĕшпех туса çитермелле.** Кашни çутă пайăркипе, вăл темле пĕчĕк пулсан та, тăшмасла хăйĕн варахурахла ĕçне тума çăмăлтатнине астăвас пулать. Çавăнпа çынсем пурăнакан кашни пункта — хулана, яла, чугунçул станцине — çутă никĕстан та, ниепле тухса палăрмалла мар туса тĕттĕмлетмелле. Çакăнпа пĕрлех, светомаскировка çынсем пурăнакан пунктсенчи пурнăç йĕркелле пынине, предприятисен производствăллă ĕçне пăсмалла мар.

Пурăнмалли суртсенче маскировка тумалли чи аван май вăл — чӳречесене чăршавсем (шторăсем) çакса картласси. Шторсене тунă материал (çатă пир, фанера е темиçе хут сыпăçтарнă хăçат хучĕ) витĕр çутă тухмалла мар. Шторăна ниçта ниепле шăтăк та, хĕсĕк те юлмалла мар туса çакмалла. Çавăнпа та вăл чӳречерен 40 сантиметр сарлакарах (кашни енчен 20-шер сантиметр) пулмалла.

Шторăна тума питĕ çăмăл: чӳречетăрне, стена çумне çирĕплетнĕ йывăç планки çине штора çапса хураççĕ. Ун çумне аялтан тепĕр йывăç планка çапаççĕ, вара вăл шторăна антарсан аялалла туртакан груз пулса тăрать.

Пусма çинчи клеткăсем çинче шторăсем тумаççĕ, анчах кунта маскировочнăй лампăсене тĕрĕс вырнаçтарнине асăрхаса тăрас пулать. Кăвак лампăн вăйĕ 15 ваттран ытла мар (напряжени 120 вольт пулсан) е 25 ваттран ытла мар (напряжени 220 вольт пулсан) кирлĕ. Маскировочнăй лампăна, çутă чӳречесемпе стенасем çине ан ӳктĕр тесе, колпакпа хӳтлес пулать.

Халăх усă куракан вырăнсенче (коридорсенче, малти пӳлĕмсенче), чӳречесем çук вырăнта ялан усă куракан лампăсенех хăварма юрать, анчах вĕсем 40 ваттран ытла пулмалла мар.

Керосинкăсемпе примуссем çунакан вырăнсенче чӳречесене яланах картламалла.

Магазинсен, аптекăсен, вокзалсен т. ыт. çавăн пек çуртсен тулалла тухмалли алăкĕсене светомаскировка тума кăшт йывăртарах. Кунта тамбурсем, иккĕмĕш алăксем е шторăсем тăваççĕ. Алăк çывăхнерехри лампăсене е кăларса илмелле, е маскировочнăй лампăсемпе улăштармалла

Заводсемпе фабрикăсенче пысăк лампăсене кăларса илеççĕ, вырăнти освещени темиçе хут пăтрах çутатассине организацилеççĕ. Производство командирĕсен тата ытти пур рабочисен те çутатас йĕркене çирĕп сыхласа пымалла.

Автомобиль транспортне светомаскировка тăвас задача çутă кĕмелли шăтăк хăзарнă тимĕр дисксемпе усă курса пурнăçа кĕртеççĕ. «Воздушная тревога» сигналĕ тăрăх çав шăтăка светофильтрпа хупласа çĕç, вара çутă пысăккăшĕ 10 хут таран пĕчĕкленет. Кайри стопсигналсене ятарласа тунă вкладышсемпе хупласа палăрми тăваççĕ.

Трамвайсене, троллейбуссене светомаскировка тума вагонсем ăшĕнчи çутта нумай чакараççĕ.

Урамсенче, çулсем çинче, площадьсенче ятарласа тунă полосасем, паллăсем, сигналсем вырнаçтарса лартаççĕ, вĕсем вара çурран çынсемпе транспорт çӳрессине çăмăллатаççĕ.

Хуласемпе ялсенче, кашни предприятипе кашни çуртра хăрушлăхлă положени тапхăрĕнче светомаскировка тĕлĕшпе ни çирĕп дисциплина тытмалла. **Пур çĕрте те чӳречесене, алăксене лайăх хуплани-хупламаннине тĕрĕслесси мĕнпур граждансен обязанноçĕ пулса тăрать.** Аçта та пулин çутă палăрать пулсан, ăна çавăнтах хупласа ним курăнми тумалла.

Астăвăр, тăшман пирĕн çĕршыва шпионсем ярать, вĕсем вара çутăпа сигнал парса сывлăшри противнике бомбăсем пăрахма тĕл кăтартса параççĕ. **Сыхă пулăр! Çивĕччĕн асăрхаса тăрăр: хăрушлăхлă положени çинчен пĕлтернĕ вырăнсенче** пур çĕрте те пăч тĕттĕм пултăр. Светомаскировкăна пăсакансем çинчен власть органĕсене пĕлтерĕр. Ун пек çынсене, вĕсем хуть те кам пулсан та, военнăй трибунал вăрçă вăхăтĕнчи пĕтĕм çирĕплĕхпе суд тăвать.

Майор Н. СЕМЕНОВ.

„ОКНО ТАСС“ плакат умĕнче

«Гитлер мĕн тăвасшăн тата вăл мĕн туянĕ» ятлă, халь çеç Шупашкара илсе килнĕ «ОКНО ТАСС» плакат Хĕрлĕ площадьре çакăнса тăрать. Ку карикатурăллă плаката кашни кун çĕршер çын пырса курать.

Гитлеризм малтанах Совет Союзĕнчи нумай наципе халăха Çĕпĕре хăваласа ярса, сĕткенлĕ çĕрсене немĕç помещикĕсене пама ĕмĕтленет. Кун çинчен немĕç фашисчĕсен ирсĕр планĕнче палăртса хунă—славянсене хăваласа ярса, юлнисене пусмăрта пурăнакан чура туса хурасси. Вăл кунпа çеç тăранмасть-ха. Славянсене вĕлерсе пырса, пирĕн таса çĕре этем виллипе витсе хурасшăн. Çакна пуçласакан Гитлерпа унăн каялăсем тахçантанпах ĕмĕтленеççĕ.

Заводсене, фабрикăсене буржуйсене валеççе парасшăн. Пусмăрта пурăнакансем вара, Гитлер чăпăркки туянаççĕ имĕш. Çук! Ку нихçан та пулас çук! Пĕтĕм ĕçхалăхĕ, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, нумай çулсем хушши хура тар кăларса тунă çĕнтерĕве—фабрикăсемпе заводсене, пуян çĕре, халăх пурăнăхне юнлă Гитлер аллине нихăçан та парас çук.

«Получит—штык, огонь, свинец,

Получит фашизм бесславный конец» тесе çырнă сăмахсем тĕлĕнче юнлă Гитлер кĕлетки витĕр пирĕн Хĕрлĕ Çарăн штыкĕ шăтарса тухать. Ирсĕр тăшмана йытă вилĕмĕ кĕтет.

— Сволочь! Сана фабрикăсемпе заводсем, пуян çĕрсем вырăнне тăхлан пуля тивес вăхăт çитрĕ, — тет курса тăракан пĕр ватă старик, почтăра ĕçлекен работник.

Гитлер çине кашни иртсе пыракан çын тарăннăн кураймасăр ыхăнать, ăна вилĕм сунать.

«Пĕр виле вырăнне—виçĕ виле, пĕр пушар вырăнне—вунă пушар хыпса илĕ»,—тесе çырнă «ОКНО ТАСС» плакат çинче.

Çак сăмахсене пурте шанаççĕ, мĕншĕн тесен, Хĕрлĕ Çар воинĕсем фашистла çынçиенсене кашни кунах пысăк çухатусем кӳреççĕ, çĕмĕрсе пыраççĕ.

— Льоврви тискерлĕхшĕн, Белоруссинчи ялсенче халăха асаплантарнишĕн фашистсене темиçе хут ытларах вилĕм пулĕ,—пĕтĕм чунĕпе тарăхса калать çайпитти хĕрарăм.

Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла ултавлăн тапăнса кĕнĕ Германи фашизмне хирĕç пĕтĕм совет халăхне пĕр çыннек пулса çапăçма чĕнет «ОКНО ТАСС» плакачĕ.

Плаката куракан кашни ĕççынни, интеллигенци, красноармеец — Гитлера хăвăртрах çапса салатас шухăш-кăмăлпа тулать.

«ОКНО ТАСС» сăввисене Москав поэчĕсем Кирсанов, Адуев, Слободской, Раскин, Рохович çырнă, художникĕ М. Черемных.

Н. ЮМАНГАЙ.

КОЛХОЗ САЧĔ

Ашă çумăр çунă хыççăн тусан пусăрăннă, çул тап-такăр. Сулахай енче ырăш тинĕс пек хумханса ларать, малта ешĕл улăхра кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе хурсем какăлтатса çӳреççĕ. Сылтăм енче васкамасăр юхакан çырма шывĕ хĕвел çуттипе кĕленче пек курăнса выртать. Çырми пысăк мар, шывне пĕр çĕртен свайсем çапсах хăмасемпе пĕвелесе хунă та, чавса пĕтернĕ котлована кĕреçесемпе тикĕслетеççĕ. Ĕçлекенсем пурте çамрăксем, калаçаççĕ, куласçĕ, сассисем таçтах илтĕнеççĕ.

— «Осоавиахим» колхоза-и?—ыйтать пĕр хĕрлĕ тутăр çыхнă тура чĕрçиттиллĕ уçă кăмăллă хĕрача, кĕреçипе тăпра ывăтса.

— Çавăнта каяс терĕмĕр-ха.

— Çырла илсе килĕр каялла тавраннă чухне, çырла нумай теççĕ вăл колхозăн пахчинче, пыл пек тутлă çырлисем,—хушса хучĕ вăл ураçăн кулкаласа. Кайран нумайччен вĕсем шавлани-юрлани илтĕнсе пычĕ...

Елчĕк районĕнче колхозниксемпе-и, е ытти çынсемпе, калăпăр, служащисемпе каласа пуçласанах, «Осоавиахим» колхозăн сад пахчи çавтери аван,—теççĕ вара.

— Сад пахчиех пуйтарчĕ вăл колхоза,—теççĕ хăш-пĕрисем.

Чăнахах та, иртнĕ çулхине колхоз мĕнпурĕ 120 пин тенкĕ таса тупăш илнĕ, вăл шутран пахча 74 пин тенкĕ ытларах тупăш панă. 1934 çултанпа ырă курараççĕ «Осоавиахим» колхозăн членĕсем çав сад пахчи уссипе.

Паллах ĕнтĕ, кашни ĕçĕн хăйĕн енĕ, хăйĕн майĕ пур. Сад пахчи хăй тĕллĕнех, никам нимĕн ĕçлемесĕрех, никам тăрăшмасăрах пулса тăман.

Патирек ялĕнчен икĕ çухрăмра, кӳлĕ патĕнче чылай пысăк çĕр лаптăкĕ ним усăсăр выртнă, ырăш аксан ырăш пулман унта, çуртри аксан çуртри йĕркеллĕ пулман. Колхозăн ун чухнехи председателĕ Сергей Егорович, чылай вăхăт Узбекистанра пурăннăскер, çав вырăна сад пахчи лартса ӳстерме шут тытать. малта пыракан колхозниксемпе каласа пăхать. Колхозниксем хирĕç тăмаççĕ, «сад лартса ӳстерсен аван пулĕччĕ», теççĕ вĕсем, анчах ăçтан пуçламалла, мĕнле лартса ӳстермелле?

Ташкентра пурăннă чухне Сергей Егорович садсене мĕнле лартса ӳстернисене, мĕнле астунисене нумай сăнанă. Çавăн чухнех унăн колхоза тавраннсан сад пахчи ĕрчетес шухăш çуралнă, яла тавраннсанах вăл çав шухăшне пурнăçлама тытăннă.

— Пирĕн Патирекре çĕр начар-и мĕн?—тенĕ вăл хăйне хăй. Шыв çывăх, пурне те лартса ӳстерме пулать. Мĕн тухать, мĕн килет, курăпăр унта — шухăшланă вăл çав вырăна пăхма кайсассăн. Сиенĕ пулас çук — усси пулма пултарать.

Унăн шухăшĕне авантарах паллашсан, бригадир Доброхотов пикенсе ĕçлеме тытăнать.

Малтанхи çулхине 150 улмуççи, хурлăхан тата чие йывăççисем лартнă, пахчине—купăста, хăяр, помидор вăрлăхĕсем акнă, çав çулхинех сăнамалла, чи малтан арбуз акнă. Унччен Елчĕк районĕнче мар, Чăваш республикинче те арбуз акса ӳстернисем пулман. Сергей Егоровичпа Доброхотов юлташсем арбуз та ӳстерме шутланă. Иккĕшĕ те пит тăрăшса астунă сад пахчине, вăхăтра шыв сапнă, çум çумланă т. ыт. те.

Çав çулхинех вара вĕсем тата авантарах ĕçлеме пуçланă, пахчана, питомнике тата ытларах пысăклатнă, тĕрлĕрен вăрлăхсем сутнă, колхоз базарне тухса лавĕ-лавĕпе тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем сутнă.

Нимрен ытла колхоз садне Федот Иванович ĕçлеме пуçласан пит вăйлатса янă. Районри колхоз шкулĕнче вĕреннĕ чухне те, унтан вĕренсе тухсан та Иванов юлташ сад пахчи ĕрчетес ĕçпе çавтери интересленнĕ, тĕрлĕ кĕнекесем, журналсем илсе вуланă, опытсем тунă, нумай пĕлекен çынсенчен ыйтса пĕлнĕ.

Хăйне садово-огороднăй бригадăн бригадирне суйласан вăл колхоз пахчине тата ытларах вăйлатас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеме пуçланă.

— Купĕн-сĕрĕн пахчаран тухма пĕлмесчĕ, яланах çавăнта ĕçлетчĕ,—теççĕ ун çинчен колхозниксем.

Çултан-çул пахча çирĕпленсе пынă, тупăшĕ те ӳснĕçемĕн ӳснĕ. Çапла вара, 1939 çулта сад-пахчаран çеç 51 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Нимрен ытла çав çулхине арбуз çавтери вăйлă пулса таврана тĕлĕнтернĕ. Сирĕн пахчара нимĕнле арбуз та пулас çук», текенсем кайран пахчана пырса пăхса тĕлĕннĕ. Вĕсенчен курмалла ытти колхозсенче те тĕрлĕрен пахча-çимĕççем ытларах лартса ӳстерме тăрăшнă, вĕсем патне пырса вĕсен ĕçне сăнанă тата ыйтса пĕлнĕ.

Хальхи вăхăтра садра, пахчара ӳсекен çимĕçсене шутласа та кăлараяс çук, мĕн кăна çук-ши унта!

Мĕнпурĕ 29,34 гектар çĕр лаптăкĕ йышăннă, вăл шутран сад вырăнĕ 16 гектар, тĕрлĕрен пахча-çимĕç вырăнĕ—14 гектар. Пахча йĕритавра «сыхлакан йывăççем» лартса ӳстернĕ.

Паллах ĕнтĕ, кирлĕ пек тăрăшмасан, астумасан, тем пек ӳснĕ сада та янăхтарма пулать, анчах халхи бригадир Василий Петров юлташ та садпахчине тата ытларах вăйлатас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйне парса ĕçлет. Ана ку ĕçре стахановкăсем: К. Трифонова, Ф. Петрова, Е. Арбузова, А. Выйчитова, Е. Гаврилова, Анна Левая пулăшаççĕ, вăхăтра çум çумлаççĕ, шыв сапаççĕ, астăваççĕ. Вĕсене те ĕç çителĕклĕ унта. Унччен бригадирта ĕçлесе темиçе хут премисем илнĕ, халĕ ялсовет исполкомĕн председателĕнче ĕçлекен Ф. Иванов юлташ та вăхăтран вăхăта пырса пысăк пулăшу парать. 1939 çулта та, 1940 çулта та вăл Мускава Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине кайса сад пахчине татах та ытларах вăйлатас меслетсемпе паллашнă, колхоза тавраннсан çав меслетсемпе усă курма тăрăшнă.

— Выставка вăл пирĕншĕн чăн-чăн университет пулчĕ, пит нумай пулăшрĕ пире,—тет Ф. Иванов юлташ.

Чылай вăхăт çав ĕçпе ĕçленипе тата уйăм шкулта та вĕреннипе Ф. Иванов юлташăн пĕлĕвĕ те, опычĕ те пысăк, вăл панă канашсене, вăл кăтартса панисене сад-пахчи бригадинче ĕçлекенсем хăпăл тусах йышăнаççĕ.

Хальхи вăхăтра вĕсен садĕнче 996 тĕп улмуççи, е урăхла каласан, вăл 9,6 гектар йышăнать, чие йывăççи — 389 тĕп, хурлăхан—1 гектар, хурăн çырли—0,75 гектар, çĕрçырли—1 гектар ӳсет. Çĕр çырли вăл уйрăм çĕрте кăна мар, тата улмуççисем хушшинче те нумай ӳсет. Садра кашни вырăна, кашни утăма усăллă тума тăрăшнă.

Нимрен ытла çак колхозăн пахчинче арбуз аван ӳсет, вĕсем пек арбуз акса ӳстерекенсем Елчĕк районĕнче те урăх çук-ха. Çавтери шултра та тутлă пулаççĕ вĕсен пахчинче ӳсекен арбузсем. Кăçал арбуз вырăнĕ—0,02 гектар кăна-ха, килес çул нумайрах хăварасшăн, хăяр—1 гектар, унсăр пуçне тата вăрлăх валли 4,5 гектар акнă, кишĕр—1,1 гектар, помидор—0,75 гектар, купăста—3 гектар, кавăн—0,25 гектар, чĕкĕнтĕр вăрлăхĕ—0,12 гектар.

Кунсăр пуçне вĕсен уйрăм питомник пур: улмуççи—0,25 гектар, хурлăхан—0,10 гектар, хăмла çырли (виçĕ сорт)—0,06 гектар т. ыт. те нумай. Кăçал кĕске вăхăтрах çырласем тата пахча-çимĕç вăрлăхĕсем сутса 10 пин тенкĕ ытла тупăш тунă, мĕнпурĕ—81 пин тенкĕ тупăш илме шутлаççĕ. Çапла пит пысăк усă парать колхоза йĕркеллĕ лартса ӳстернĕ сад-пахчи. Малашне ăна тата ытларах вăйлатма тăрăшмалла, ытти колхозсем те вĕсенчен пример илмелле.

С. ЯЛАВИН.

Çĕршыв оборонин фончĕ

Кăшаркассинчи (Çĕрпӳ р.) «Пионер» колхоз оборона фондне валли 300 пăт тырă, пĕр ĕне, пĕр лаша тата 500 литр сĕт пама йышăнчĕ. Çавăн пекех, колхозниксем те оборона фондне укçа, заем облигацийĕсем хываççĕ тата кашни уйăхра пĕр ĕçкунĕ çине тивекен тупăша парасçĕ.

Колхозниксем сывлăшран килсе тапăнинчен сыхланма хатĕрленеççĕ. Кашни колхозник хăйĕн килĕ умне шыв, хăйăр хатĕрлесе лартнă. ПВХО ĕçне вĕренеççĕ.

Н. ОКУНЕВ.

* * *

Йĕршерти (Куславкка р.) Тельман ячĕпе тăракан колхоз членĕсем оборона фондне кашни уйăхрах пĕр ĕçкунне тивекен тупăша парса тăма пулчĕç.

Колхозниксем чылайăшĕ ялхуçалăх налогне тата страховка укçине срокчен тӳлесе татрĕç.

А. А.

* * *

ТАВАЙ. Чӳкçырминчи туллимар вăтам шкулти преподавательсен коллективĕ çĕршыв оборонин фондне, Германи фашисчĕсене çĕнтеричченех, кашни уйăхра пĕр кунхи ĕç укçине пама пулчĕ. Кунсăр пуçне тата преподавательсем Романов юлташ 200 тенкĕлĕх, А. Васильев юлташ 100 тенкĕлĕх заем облигацисене оборона фондне панĕç.

В. АШМАРИН.

Рузвельтпа Черчилль Сталин юлташ патне янă чĕнӳ пирки США-ра мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Производствăллă профсоюзсен конгресĕн Нью-Йоркри организацийĕ хăй Рузвельтпа Черчилль Сталин юлташ патне янă чĕнĕве пĕтĕмпех ырлани тата ун майлă тăни çинчен пĕлтерсе резолюци йышăннă. «Эпир çапла шутлатпăр, — теНĕ резолюцире,—çак чĕнӳ вăл фашизма çĕнтерессинче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Материальнăй пулăшăва чăсрах пама пулни, çавăн пекех пĕрле çыхăнса ĕçлес тĕлĕшпе вăрăм вăхăта пыракан политикăн программине туса хатĕрлеме Мускавра иртнĕ конференцире палăртнă канашлу пуласлăхшăн перспектива параççĕ. Çакна чăн-чăн демократиллĕ шухăш-кăмăла тытакан пур çынсем те саламлаççĕ».

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англин çар снабженийĕн министрĕ Бивербрук Гопкинс патĕнче ирхи апатра пулнă. Авторитетлă çынсем каланă тăрăх, вăрçă материалĕсене Совет Союзне часах çитерсе парас задачăна пурнăçлас ĕçе Гопкинс хăйĕн çине илет.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельтпа Черчилль Совет Союзне чи нумай пулăшу пама сĕнни вăл пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕ халăхсен тĕп тĕллевне пурнăçлама—Европăна нацистла пусмăртан ирĕке кăларас тĕллеве пурнăçлама реальнăй вклад хушни пулать. Вырăс халăхĕ çак тĕллеве пурнăçлас тĕлĕшпе ытти çĕршывсемпе чаплă çыхăнусем тума тытăнчĕ ĕнтĕ, çавăнпа та ăна, хальхи вăйлă кĕрешӳре пирĕн пĕтĕмĕшле тăмана май килнĕ таран пысăкрах сиен тума пулăшас тесе, США-па Англи пама пултаракан кирек мĕнле материальнăй пулăшăва та пур енĕпе те мухтас пулать.

Греци премьер-министрĕ Рузвельт патне янă телеграмма

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Грецин хăйĕн çĕршывĕнчен тухса каяннă правительствин премьер-министрĕ Цудерос Кептаунран (Кăнтăр Африка) Рузвельт патне телеграмма янă, çав телеграммăра вăл США президенчĕпе Англин премьер-министрĕ Атлантика океанĕнче тĕл пулнине тата вĕсем иккĕшĕ пĕрле декларацине кăларнине пысăк кăмăлпа йышăнни çинчен пĕлтерет. Ку декларацине, тесе палăртăвать Цудерос, союзлă державăсен вăрçă тĕллевĕсем, вĕсен мĕнпур тусĕсем ырласа йышăннăскерсем, пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕ халăхсен ăмăчĕсене палăртса тăнине официальнăй йĕркепе пысăнать. Цудерос хăйĕн телеграммине çапла вĕçлет: «Эпир пурсăмăр та идеалпăн кĕрешетпĕр, çав идеалăн тĕллевĕ—агрессор усă куракан пусмăрлăхпа тискер вăйсен меточĕсене пĕтерсе тăкасси, çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчене ирĕке кăларасси—вĕсем хальхи вăхăтра пирĕн противниксем е туссем пулса тăнине пăхса тăмасăрах, ирĕке кăларасси пулать. Çак вăрçă çĕнтерӳллĕн вĕçленессе эпир ниҫҫанхинчен те çирĕп шанса тăратпăр».

Англин çар министрĕ Марджессон тухса калани

Англин çар министрĕ Марджессон хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: вăрçă ĕçĕсем Критран, Сирирен тата Ливирен Совет Союзĕ çине куçни Англи халăхĕ вăрçă çине халиччен мĕнле пăхнине татăклăнах улăштарса ячĕ. Пирĕн вырăс туссем çавтери лайăх кĕрешни кăмăла тарăннăн савăнтарса çĕклерĕ. Вĕсем çĕр çинче Германи çарĕсене хирĕç пуринчен те малтан хăватлăн кĕрешме пултарнине кăтартса пачĕç. Вырăссен хăйсен территорийĕнчен ирĕксĕрех чакма тивсен, вĕсем хăйсем хыççăн пĕтĕмпех çунтарса тата пĕтерсе хăварассĕç. Хăйсен пурнăçне, çурт-йĕрне, ялне, тырри-пуллине нимĕн те шеллемесĕр кĕрешекен çав хăюллă арçынсемпе кĕрĕмсене эпир саламлатпăр. Вĕсем нимĕскер те кĕрхенмеççĕ, çĕнтерӳ тăвас тесе пурне те çапăçу валли паракаçĕ.

Марджессон малалла çапла каланă: вырăссем Германи çарĕсене хирĕç çапăçнине пула пире валли сывлăш çăвăрса илме вăхăт пулни хальхи пĕтĕм тĕнчери вăрçăра вăйсене пĕтĕмпех улăштарса хума пултарать. Германи çарĕсем халĕ вăйлă-ха. Российăра пуçарнă авантюра Германи салтакĕсем хушшинче кăна мар, Германи халăхĕ хушшинче те канăçсăр кăмăл-шухăша хускатса ярать, ку ĕнтĕ чи кирли пулса тăрать.

Совет çарĕ тăшмана хирĕç вăйлăн кĕрешсе пынине кура «айккинче» юлса, хĕвелтухăçĕнчи вăрçă пирĕншĕн усăллă вĕçленессине шанса тăма пулать», тата Англин ĕçĕ — утравсене сыхласа хăварассинче тата Атлантикăшăн пыракан çапăçура хамăра поражени тӳсмо парас марринче кăна пулать, тесе шухăшлакан çынсене Марджессон хытă критикленĕ. Марджессон, çапла шухăшлани вăл пысăк хăрушлăх патне ĕлкĕрнĕ пынине çинчен асăрхаттарнă. (ТАСС).



Англи çарĕн сывлăш-çар вăйĕсем. Укерчĕк çинче: 1000 килограмм йывăрĕш фугаслă бомбăна çакни. (ТАСС фотоукерчĕкĕ).

Мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ çинчен США-ра мĕн каланă

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Мĕнпур славян халăхĕсен митингĕнче вырăс писательĕ Алексей Толстой тухса каланă сăмах содержанийĕ çинчен агентствăсем Мускавран панă пĕлтерӳсене Америка печечĕ сарлакан пичетлесе кăларнă. Агентствăсен пĕлтерĕвĕсенче славянсен çĕршывĕсен никама пăхăнмасăр пурăнмалли положенине сыхламашкăн пĕрлешме чĕннине палăртнă. «Кристен Сайенс Монитор» хаçат Балкансенче хăйĕн корреспонденчĕ пулса пураннă Маркхэмăн статьине пичетлесе кăларнă, унта пĕтĕм тĕнчери славянсене Гитлера хирĕç кĕрешмешкĕн пĕрлештерме хăтланнине «славянсен нумайĕш çĕршывĕсенче кăмăлласа йышăнĕç», тесе çырнă. Славянсем — Европăра чи пысăк группа, унти пĕтĕм халăхсенчен 45 проценчĕ пулса тăраççĕ. Славянсен çĕршывĕсем Европа территорин çуррине йышăнаççĕ. Гитлер мĕнпур славянсене пусмăранисен, çаратса пĕтернисен тата мăшкăл тӳснисен лагерьне пĕрлешмелле туса хучĕ. «Гитлер, хăйĕн ытти жертвисем пекех, Болгарире, Словакире тата Хорватире пуçпулса тăнă пирки çак чĕнӳ çав çĕршывсенче влияни тума пултараймасть, тесе шутлани йăнăш пулнă пулĕччĕ» тесе çырать Маркхэм.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин авиаци министерствин коммюникине парать, унта çапла каланă: Англи авиацийĕ августăн 17-мĕшĕнче Çурçĕр Франци çине пырса тапăннă чухне Германин 7 истребительне персе антарнă. Англи авиацийĕн икĕ истребитель тата пĕр бомбардировщик пĕтнĕ. Бомбардировщикăн экипажĕнчи 4 çынран виççĕшĕ çăлăннă. Августăн 17-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен «Бофорт» йышши бомбардировщиксем, истребительсемпе пĕрле, противникăн Ла-Манш тăрăх, Ле Туке çывăхĕнче иртсе пыракан танкерне атакăланă. Торпеда танкерăн кормине пырса тивнĕ.

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 17-мĕшĕнче кăнтăрла противникăн пĕр самолечĕ Шотландин кăнтăр-хĕвелтухăç çыранне çывăх пункт çине бомбăсем пăрахнă. Пысăк мар сиен кӳнĕ. Жертвăсем пысăк мар.

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин информаци министерствин çакăн пек пĕлтерĕвне парать: августăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин нумаях мар самолечĕсем Англи территорийĕ çине вĕçсе пынă. Пĕр самолетне персе антарнă. Англин хĕвелтухăç тата кăнтăр хĕвеланăç çыранĕнчи хăшпĕр пунктсем çине, çавăн пекех çурçĕр-хĕвелтухăç енчи пĕр хула çине бомбăсем пăрахнă. Кăштах сиен тунă. Жертвăсен хисепĕ пысăк мар.

Лондонран илнĕ сведенисем тăрăх, августăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ хĕвеланăç тата çурçĕр-хĕвеланăç Германири объектсем çине каллех пырса тапăннă.

Франци халăхĕ оккупантсене хирĕç кĕрешет

Францирен килекен хыпарсем çакăн çинчен çирĕплетсе параççĕ: фашистла захватчиксем вăрă-хурахла пуçпулса тăнине пула пуçланса кайнă выслăхпа суклăх çĕршывра ытларах та ытларах сарăлаççĕ. Акакан çĕрĕн лаптăкĕ питĕ нумай чакнă. Центральнăй Франци районĕсенче тырă калчисене вăйлă çумăрсем сиенлесе хăварнă. Горючи суккипе, ĕçлекен çынсем тата ыттисем çитменнипе кĕркуннехи уйăхир ĕçĕсене ирттерме питĕ йывăр пулать.

Парижри пĕр магазинра та çу, рис, чей, кофе, сунăнь тата ытти таварсене те тупма çук. Ку продуктсене вăрттăн рыноксенче çеç анлă массăсем туянма пултарайман пысăк хакпа илме пулать. Францири чылай районсенче пурлăхлă çынсем те темĕн пек пысăк хакпа та аш-какай илме пултарайманнăçĕ.

Францирен Женевăна пынă çынсем Германи пуçпулса тăнине тата çарăнине Францири халăх вăйлăрах та вăйлăрах хирĕç тăни çинчен пĕлтереççĕ.

Французсем немĕç захватчикĕсене хирĕç тĕрлĕрен меслетпе тата нумай тĕслĕ формăпа кĕрешеççĕ. Германи заказĕсене пурнăçлакан предприятисенче француз рабочийĕсем ĕç хăвăртлăхне юриех чакараççĕ. Францири хуласенчи çуртсен стенисем çине тĕттĕм çĕрсенче фашизма хирĕсле лозунгсемпе эмблемăсем çырса хураççĕ. Парижра метро станцийĕсенче çакăн пек çырса хунисене яланах курма пулать: «Гитлера вилĕм», «Тĕп пултăр Дарлан» т. ыт. те. (ТАСС).

Фашистла оккупантсен пусмăрĕ айĕнче

Чехсемпе словак хресченĕсем гитлерла Германие тырă тата ытти продовольстви парассăн мар пулни çинчен Лондона халĕ те сведенисем пырса тăраççĕ.

Гестаповецсемпе глинкогвардеецсем Словаки ялĕсенче хаяр репрессиллĕ ĕçсем тата талкушăпех ухтарусем туса ирттернине пăхмасăрах, хресченсем хăйсен тыррисене памаççĕ. Нумайĕшĕ çапла калаççĕ: «Хамăр тырра нимĕçсене париччен çĕр айĕнче çĕртетпĕр», теççĕ. Чехипе Моравире те çавăн пек ĕçсемех пулса иртеççĕ. Чехипе Моравири хресченĕсем 130 пин тонна тырра çĕр айĕнче пытарса усранине Германири официальнăй влаççсен хăйсен те ирĕксĕрех йышăнмалла пулнă.

* * *

Лондонра Прагăран илнĕ сведенисем тăрăх, халĕ Германи оккупанчĕсем сентябрĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа чехсен 56 вăтам шкулне хупма чĕнтĕлĕ приказ каларнă. Протекторатăн çутĕç министрĕ» Капрас, чехсем ăна «тĕтĕмлĕх» министрĕ тесе тĕрĕссипе ят панăскер, оккупантсен приказне ырланă.

* * *

Чехословаки пичечĕн Нью-Йоркри бюровĕ Прагăран илнĕ пĕлтерĕвĕнче Чехипе Моравин протекторĕ Нейрат-чехсен 520 хаçатне кăларма чарни çинчен каланă.

* * *

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ, Парижра 13 уйăх хушши пурăнăскер, çапла çырать: «Французсен мĕнпур интересĕ халĕ çăкăр пирки тăракан ыйту çине куçнă.

Нумай продуктсем, пуринчен малтарах çăкăр, çу, сĕт, аш-какай çитмеççĕ. Уçă рынокра продуктсен хакĕсем 500 процент ӳснĕ, вăрттăн биржăра вĕсем татах темиçе хут хаклă. Текстиль промышленноçĕ, вăрçăчченхипе танлаштарсан, хăйĕн продукцине 35 процент чухлĕ çеç туса кăларать».

Францин Сирири салтакĕсемпе офицерĕсем де Голль вăйĕсем енне куçнă

ЛОНДОН, августăн 16-мĕш. Афи агенстви пĕлтерет: Тиршолири (Сирия) французсен группине, де Голль генералăн войскисем енне куçма кăмăл тунăскерсене, Франци жандармĕсем арестленĕ пулнă, анчах союзниксен Сирири влаççĕсем çав жандармсене арестлесе, доброволецсене ирĕке кăларнă.

Сирире юлнă нумай французсем де Голль войскисемпе пĕрлешеççĕ. Денц çарĕнче пулнă 60 офицер ĕнер де Голль çарĕ енне куçнă. Виши влаççĕсем Сирине пĕр вăхăтра ятларласа войскăсен ударнăй группине янă пулнă, анчах вĕсен чылай пайĕ Германие хирĕç пыракан вăрçăра кĕрешме шухăш тытнă, тесе пĕлтереççĕ.

«Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Сири радиостанцийĕ, халиччен Виши правительствин аллинче тăнăскер, халĕ ĕнтĕ де Голль войскисен аллине куçнă. (ТАСС).

Болгари хресченĕсем гитлерла тарçă Габровский сăмахне хирĕç

Болгарин шалти ĕçсен министрĕ Габровский нумай пулмасть сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахне ССР Союзне хирĕçле каланă. Çак сăмах Болгари хресченĕсен анлă массисене тарăхтарса янă. Чирлĕ туç çинчен сывă пуç çине йăвалантарма тăрăшса, министр ССР Союзне хирĕç кĕрешме чĕннĕ, Совет Союзне «большевизм ялсен тата хресченсен хĕрушă тăшманĕ пулса тăрать», тесе айăпланă.

Анчах та Болгари хресченĕсем тӳсме çук йывăр пурнăçпа пурăннă факта Габровский тунма пултараймасть. Германи фашизмĕ пусмăрланă хыççăн хресченсен пурнăçĕ татах та ытларах йывăрланнă.

Болгари правительствин членĕсем, депутатсем тата политикăллă деятельсем хресченсен Габровский сăмахне протестлесе çырнă пиншер çырăвĕсене илеççĕ.

«Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Болгари хресченĕсем хушшинче пысăк пăлханусем пуçланнă. Полици службине тума Болгарие Италин çĕнĕ дивизийĕсене янă. Болгари хресченĕсем Совет Союзĕ çине туслăн пăхаççĕ. Хресченсем Болгари çарĕнче тĕл масса пулса тăнă пирки, çак факт питĕ пысăк вырăнта тăрать. Çĕршывра вăрттăн обществăсем ĕçлеççĕ.

Августăн 17-мĕш. (ТАСС).

Тинĕс çинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: августăн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи тинĕс-çар флочĕн самолечĕсем противникăн Триполине каякан караванĕпе пĕрле пыракан виçĕ суту-илӳ суднине тата пĕр эсминецне торпедăсемпе пенĕ. Августăн 15-мĕшĕнче кăнтăрла Вăтаçĕр тинĕсĕн центральнăй пайĕнче Англи авиацийĕ противникăн Триполите Бенгази хушшинче пыракан икĕ танкерне тата икĕ шхунине атакăланă. Тăватă судни çине те бомбăсем тĕл ӳкнине палăртнă. Пĕр танкерĕ взрыв пулса сирпĕнсе кайнă, тепĕрне вут тивретнĕ. Катания районĕнче гаваньре тата центральнăй мол районĕнче пухăнса тăнă суднăсем çине бомбăсем пăрахнă, бомбăсене тĕл пăрахса пысăк сиен кӳнĕ.

Кунта пĕрлех çапла пĕлтернĕ: Англин патрульри хăрапĕсем Германин «Нордерней» ятлă пароходне тытса илнĕ. Ку карапăн водоизмещенийĕ 3.667 тонна пулать. Çавăн пекех Италин «Стрела» ятлă суднине тытса илнĕ, унăн водоизмещенийĕ—4.272 тонна. Карапсем çинчи хаклă грузсене конфискацилеНĕ.

Германин Мускавра пулнă çар атташине персе пăрахни çинчен

Берлинран Швейцаринчи Цюрих хулине пынă сведенисем тăрăх, Германин Мускавра пулнă çар атташине, ССР Союзĕн хӳпăшаллă вăйĕсен состоянийĕ çинчен тĕрĕс мар информаци панă тесе, Германи руководителĕсен приказĕ тăрăх çак кунсенче персе пăрахнă.

(ТАСС).

Германире шикленсе ӳкнĕ

СТОКГОЛЬМ, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Германирен нумаях пулмасть тавăрăннă пĕр палла çын çапла пĕлтернĕ: Германире положени йывăрланнăçемĕн йывăрланса пырать. Халăхсен тĕрлĕ сийĕсем ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçă çине урăхла пăхни палăрса пырать. Германи çарĕ çавтери пысăк çухату туни халăха тĕлĕнтерет. Июлĕн юлашки пĕр кунĕнче кăна Мюнхен граждăнĕсем фронтра вилни çинчен Мюнхен халăхне пĕлтерсе 170 телеграмма пынă. Ывăлĕсем фронтра çапăçакансен аппăшĕ-амăшĕсем нумайĕшĕ çапла калаççĕ: «Эпир ĕнтĕ хамăр ывăлсене текех кĕтместпĕр». Фронтран аманса тавăрăнăнсем, наступлени вăхăтĕнче иккĕленсе тăракан салтаксене офицерсем персе пăрахни çинчен каласа параççĕ.

Германин верховнăй командованийĕн суя пĕлтерĕвĕсене халăх ĕненмест. Халăха куллен кирлĕ апат-çимĕç продукчĕсем парса тăрасси питĕ начарланнă. Талонсем тăрăх продуктсем илес тесе черетре тăрса темиçе кун ирттереççĕ. Уйрăмах аш-какай çитмест. Геббельсăн суя пропагандине никам та ĕненмест. Национал-социалистла çынсем хушшинче Гитлер çине шанмасăр пăхма пуçланă.

«Мĕншĕн пирĕн çак ССР Союзне хирĕçле вăрçа кĕрсе каймалла пулнă-ха» тесе калаçнине час-часах илтме пулать. ССР Союзăн çинчен юратса калаçасси чылаях ӳснĕ. Халăх хушшинче Германи вăрçăра поражени тӳсес шухăш ӳссех пырать. Çав шухăшсене пухса çапла калама пулать: Гитлера çĕмĕрсе тăкни çеç Германие национал-социалистсем пуçпулса тăрассинчен тата катастрофăран çăлса хăварма пулать.

Комсомолецсемпе çамрăксен пысăк çитĕнĕвĕ

Августăн 17-мĕшĕнче пулнă воскреснике 126 пин çын хутшăннă

Августăн 17-мĕшĕнче комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникĕ пулса иртрĕ. Вăл воскресник пирĕн республикăра та ăнăçлăн иртрĕ. Çав воскресникре тунă çитĕнӳсем пирĕн республикăри çамрăксем хăйсен тăван çĕршывĕ умĕнчи граждăнла тивĕçлĕхне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынине кăтартса пачĕç.

Республика тăрăх воскреснике мĕнпурĕ 125.967 çын хутшăннă, вăл шутран комсомолецсем 19.565 çын пулнă. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, воскресник участникĕсем оборона фондне 77 пин тенкĕ укçан тата 103.571 ĕçкунĕ панă.

Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Тăвай, Чкаловски, Сĕнтĕрвăрри тата Шупашкар районĕсенче воскресник çавтери пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче воскреснике мĕнпурĕ 6.764 çын, вăл шутран 467 комсомолец тухнă. Вĕсем оборона фончĕ валли 6.789 ĕçкунĕ туса панă. Воскресник кунĕнче колхоз çамрăкĕсем уйри тырпулсене пухса кĕртес çĕрте пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри (Шăмăршă районĕ) Матвеев, Мамет ов, Патова комсомолецсем кашниех 3—3,5-шар ĕçкунĕ тунă.

Çавăн пекех, Шупашкар хулинче те воскресник лайăх иртрĕ. Хулара пурĕ 5.459 çын хутшăннă. Оборона фондне 22.174 тенкĕ ĕçлесе панă. Уйрăм предприятисенчи çамрăксем воскреснике стахановла ĕçĕн образецĕсене кăтартрĕç. Авторемонтнăй мастерскойра токарьсен тата сварочнăй цехсенчи комсомолецсем пурте хăйсен пĕр кунхи ĕç нормине ытлашшипех тултарнă. Комсомол пуçламăш организацин секретарĕ Иванов юлташ ĕç нормине 800 процент, токар Покровский 300 процент, моторист Мульштейн 150 процент тултарнă.

Канаш станцинчи депора ĕçлекен çамрăксем августăн 17-мĕшĕнче оборона фондне 2.447 тенкĕ панă. Вăрмарти «Спортинвентарь» фабрикинчи рабочисем тата поселокри шкулта вĕренекенсем 8 тонна тимĕр-тăмăр пухнă.

Пăрачкав совхозĕнче 285 çын ĕçленĕ. Çамрăксем ватă рабочисемпе тата служащисемпе пĕрле, 82 гектар çинче утă пухса кĕртнĕ. Çапла вара вĕсем оборона фондне 1.980 тенкĕ ĕçлесе панă.

Çитĕннисем çеç мар, шкулта вĕренекенсем те воскреснике активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Нумай районсенче пионерсемпе шкул ачисем тимĕр-тăмăр пухнă.

Çак çитĕнӳсем, çамрăксем воскреснике çавăн пек йышлăн хутшăнни — вăл пирĕн совет çамрăкĕсем хăйсен тăван çĕршывне, Ленин — Сталин партине, аслă Сталина чĕререн парăнса тата юратса тăни çинчен калаççĕ.

Совет çамрăкĕсем тата вĕсен малта пыракан отрячĕ — ленинла-сталинла комсомол Германин урса кайнă фашизмне çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе малашне те хăйĕн вăйне, пурнăçне шеллемесĕр ĕçлесе мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшса пырĕ.

П. МИХАЙЛОВ.
ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ.

Воскресникре 1.250 çын ĕçленĕ

ЭЛĔК. Иртнĕ вырсарникун районри комсомолецсемпе çамрăксем оборона фончĕ валли воскресник туса иртчĕç. Вăл воскресникре мĕнпурĕ 1.250 çын ĕçленĕ. Элĕк колхозĕнче 54 çын, Ойкасси колхозĕнче 17 çын, Урмайра—12 çын, «Трактор» колхозра 28 çын кунĕпех тырă вырнă. Элĕк колхозĕнче ĕçленĕ юлташсенчен уйрăмăнах Юрпунова, А. Акрамовская, К. Ганькова, М. Туюкова, Казанкова хĕрачасем ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартрĕç. Вĕсем пĕр кунхи ĕç нормине ытлашшипех тултарнă.

Çавăн пекех, Тури Вылăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра та комсомолецсемпе çамрăксем пурĕ 230 çын ĕçленĕ. Комсомолецсем хăйсем ĕçлесе илнĕ 200 тенкĕ укçана пĕтĕмпех оборона фондне панă.

Воскресникре ĕçленĕ юлташсем районри мĕнпур çамрăксене тата колхозниксене пĕр кун ĕçленĕ ĕç тупăшне оборона фондне пама чĕнчĕç.

А. ВОЛКОВ.
К. СОЛОВЬЕВ.

Иртнĕ вырсарникун

КАНАШ, августăн 19-мĕш. (**Хамăр корр., телефон тăрăх**). Районри колхозсенче пысăк тухăçлă тырпулсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртессишĕн кĕрешӳ анлăн сарăлса пырать. Уборкăна пĕтĕм халăх хутшăнчĕ.

Иртнĕ вырсарникун районри предприятисенче, учрежденисенче тата шкулсенче ĕçлекенсем çĕршер çын колхозсене кайса пулăшрĕç.

«Автотракторособыт» конторинче ĕçлекенсем 18 çын Каганович ячĕпе тăракан колхозра ĕçленĕ. Вĕсем унта 4,5 тонна ыраш çапнă. Колхоз çак кунсенче ыраш акма тухрĕ.

«Росснабсбыт» конторинче ĕçлекенсем, ирхине 5 сехетрен пуçласа тĕттĕм пуличченех «Идея Ленина» колхозра ыраш вырнă.

Чăвашторгăн районри отделенийĕнче ĕçлекенсем 43 çын, «Красный воин» артелĕнче ĕçлекенсем 72 çын, «Авангард» артелĕнче ĕçлекенсем 60 çын, Мясокомбинат конторинче ĕçлекенсем 20 çын колхозсенче тырă вырнă.

Иртнĕ вырсарникун районри 52 организацинчен 697 çын колхозсен уйăрĕсемпе итемĕсем çинче ĕçленĕ.

Педагогика училищипе вăтам шкулта ĕçлекенсем çывăхри «Комбайн» тата «Новый путь» колхозсене уборка ĕçĕнче кулленех пулăшса пыраççĕ. «Авангард» тата «Швейник» артелĕнче ĕçлекенсем те производство ĕçĕнчен пушаннă хыççăн колхозсене пулăшма хире тухаççĕ.

Иртнĕ вырсарникун хулара та, колхозсенчи пекех, хĕрӳллĕ ĕç пычĕ. Унти комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем 2000 çын ытла комсомолецсемпе çамрăксен оборона фончĕ валли иртернĕ воскресникре хутшăннă. Чугунçул узелĕнчи работниксем воскресникре 2.447 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Вăл укçана оборона фондне хывнă.

Туллимар сведенисем тăрăх, районра пĕтĕмпе 10 тонна тимĕр-тăмăр пухнă.

Тр. МАЙОРОВ.

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

Ку кĕнекене кашни чăваш хĕрарăмех вуласа тухмалла

К. НИКОЛАЕВА. «Совет хĕрарăмĕсем—тăван çĕршыва хӳтлеме», Чăвашгиз, 1941 ç., 20 стр., хакĕ 20 пус.

Пирĕн тăван çĕршыв çине Германи фашисчĕсем вăрă-хурахла тапăнчĕç. Вĕсем пирĕн телейлĕ пурнăçа пĕтерсе хума тăрăшнине совет халăхĕ пит те аван пĕлет.

Фашистла çĕлен-калтасене хирĕç Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăх çĕкленчĕ. Тăван Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ, чаплă авиаци фашистла бандăсене хирĕç паттăрăн çапăçаççĕ.

К. Николаева юлташ хăйĕн брошюринче совет хĕрарăмĕсен задачисем çинчен çырать, вĕсен мĕн-мĕн тумаллине, мĕн-мĕн вĕренмеллине каласа парать.

«Совет хĕрарăмĕсен,—тет вăл,—çакна астуса тăмалла: вĕсем питĕ нумай ĕçсем тума пултараççĕ. Сăмах—тăван çĕршыва хӳтлесси çинчен, Хĕрлĕ Çара пулăшасси çинчен пырать».

«Хĕрарăмсен чи пирвайхи задачи вăл—производствăна каякки, пĕр-пĕр профессие вĕренсе çитсе станок çинче стахановла ĕçлесси, чи пысăк ĕç тухăçлăхĕ тăвасси пулса тăрать» (10—11 стр.).

Çапла ĕçлени вăл вăрçă ĕçне тунинех пĕлтерет, мĕншĕн тесен фронтпа тыл пĕр-пĕринне ним уйăлми тачă çыхăнса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçă условийĕсем хĕрарăма хĕçпăшал тыткалама пĕлме, сывлăшран тапăнасран сыхланмалли мĕнпур правилăсене пĕлме, харпăрхăй тĕллĕн сыхламалли хатĕрсемпе, противогазпа усă курмашкăн пĕлме хушаççĕ. Хĕрарăмăн кĕреçепе, ломпа усă курма вĕренмелле, пушар сӳнтермелли правилăсене пĕлмелле, госпитальсенче, лазаретсенче тата ытти сывлăх учрежденийĕсенче ĕçлесе вĕренмелле тата ыт. те.

Çаксене тума вăрçă обстановки хушать. Совет хĕрарăмĕсем, çĕршыв умĕнчи хăрушлăх мĕнтери пысăк пулнине ăнланса илсе:

— Пирĕн упăшкасем фронта кайрĕç, эпир производствăна каятпăр,—теççĕ. Çак чĕнӳ пирĕн çĕршыври патриоткăсене ытларах та ытларах хавхалантарать.

К. Николаева юлташăн брошюрине чăвашла çăмăл чĕлхепе куçарнă. Ана кашни чăваш хĕрарăмех вуласа тухмалла.

В. Д-в.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТИХА ÇУХАЛНĂ

(ăйăр, 4 уйăхра).

Аслă Карачурăри „Коминтерн" колхоз правленине (Шупашкар р) пĕлтерме ыйтатпăр.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—83, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2763.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 98, 84 п. л.